24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
МАЙ
25
ВЫРСАРНИКУН
121 (5836) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешер.

# Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

*Çуракинче пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн ВКП(б) райкомĕсем тата ĕççынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:*

67. **А. Иванов, К. Е. Егоров, Н. М. Миронов** — Шăхасан районĕнчи «Орешино» колхоз сеяльщикĕсем, лашапа ĕçлемелли 13 ретлĕ сеялкăпа норма тăрăх 7 гектар вырăнне кашни кун 16-шар гектар акаççĕ.

68. **П. Семенов** — Шăхасан районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз сеяльщикĕ, 13 ретлĕ сеялкăпа норма тăрăх 7 гектар вырăнне кашни кун 14-шар гектар акать.

69. **П. К. Корнилов** — Шăхасан районĕнчи «Заря» колхоз сеяльщикĕ, 13 ретлĕ сеялкăпа норма тăрăх 7 гектар вырăнне кашни кун 14-шар гектар акать.

70. **П. Д. Давыдов** — Шăхасан районĕнчи «Заря» колхоз сеяльщикĕ, 7 ретлĕ сеялкăпа норма тăрăх 4 гектар вырăнне кашни кун 8-шар гектар акать.

71. **А. Николаев, Н. Якимов** — Шăхасан районĕнчи «Гигант» колхоз сеяльщикĕсем, лашапа ĕçлемелли 13 ретлĕ сеялкăпа норма тăрăх 7 гектар вырăнне кашни кун 14,3 гектар акаççĕ.

72. **«Красноармеец» колхоз** (председателĕ Н. С. Самонов юлташ) — Калинински район. Колхоз ир акмалли тĕштырă культурисене 4 кун хушшинче, агротехника енчен пысăк пахалăхпа акса хăварнă.

## *Колхоз стройĕ тунă çĕнтерӳсен демонстрацийĕ*

Паян тăван çĕршывăн столицинче, Мускавра, Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставки — социализмлă çĕрĕçĕн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсен смотрĕ уçăлать. Выставка павильонĕсем çинчи хăмач ялавсем каллех вĕлкĕшме тытăнаççĕ, социализмлă çĕрĕçĕнче малта пыракансен паха та хаклă опычĕн аслă шкулĕн — колхозлă университетăн алăкĕсем каллех сарлакан уçăлаççĕ, вĕсем Союзăн пур кĕтессисенчен те пухăннă хăнасене хавасlăн кĕтсе илеççĕ.

Выставка колхоз стройĕн тĕлĕнмелле пысăк çитĕнĕвĕсене кăтартса парать, колхозлă хресченсен творчествăллă пуçарулăхне малашне татах та хăватлăн аталантарма хавхалантарать. Çак «выставка çĕнтерӳсен итогне кăтартать çеç мар, вăл тата ялхуçалăхне малалла çĕклентерсе пыма, социализмăн çĕнĕ те чаплă çĕнтерĕвĕсене тума хăватлăн чĕнекенни пулса тăрать» (В. М. Молотов).

Кăçалхи выставка, ытти çулхисемпе танлаштарсан, уйрăмăнах паллă пулса тăрать. Кăçалхи выставка унти павильонсене натуральнăй экспонатсемпе ытларах пуянлатнипе кăна мар, кăçал ăна лайăхрах туса йĕркеленипе, унăн содержанине социализмлă ялхуçалăхĕнчи çĕнĕ çĕнтерӳсен питех те пысăк факчĕсемпе пуянлатнипе паллă пулса тăрать. Кăçалхи выставкăра колхозсем, совхозсем, колхозниксен нумай миллионлă массисем çĕрĕçĕнче малта пыракансен паха опычĕсем тăрăх ĕçлесе пырса пысăк çитĕнӳсем тунине анлăрах кăтартса панă. Кăçалхи выставкăна Союзлă çĕнĕ республикăсен — Латви, Литва тата Эстони СС Республикисен павильонĕсем хутшăннă.

Иртнĕ çулсенче çанталăк условийĕсем çĕрĕçĕшĕн лайăхах мар пулчĕç пулин те, пирĕн большевикла колхозсем вăйлă тырпул туса илес ĕçре пысăк та пархатарлă çитĕнӳсем турĕç. Çак ăмăртура кашни колхоз, совхоз, МТС, кашни бригадăпа звено, кашни колхозникпа колхозница, кашни специалист пысăк тухăçлă тырпулшăн, пысăк продуктивлă выльăх-чĕрлĕхшĕн, колхоз тата совхоз производствине культурăллă тăвассишĕн кĕрешрĕç, ĕçĕн пысăк тухăçлăхне кăтартса ĕçлерĕç. Кун çинчен пире Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕсен хисепĕ çулленех ӳссе пыни аван кăтартса парать.

Иртнĕ çулта пирĕн республикăран выставкăра 815 участник пулнă пулсан, кăçал 1300 участник, вăл шутра 4 район, 124 колхоз, икĕ МТС, 36 ферма, çĕрĕçĕнче малта пыракансем 370 çын тата совхозсем пур.

Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставки ĕçлеме пуçланăранпа ялхуçалăхĕнче малта пыракансен речĕ çулленех ӳссе пырать. 1939 çулти выставка участникĕсенчен Совет правительстви пирĕн республикăри Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоза Ленин орденĕпе, Елчĕк районĕнчи «Ново-Ищеряково» колхоза Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăларĕ. Вăрнар тата Чкаловски МТС-сем Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин пĕрремĕш степеньлĕ дипломне, Йĕпреç МТС иккĕмĕш степеньлĕ диплома илме тивĕçлĕ пулчĕç. 1939—1940 çулсем хушшинче пĕрремĕш степеньлĕ диплом 6 колхоз, иккĕмĕш степеньлĕ диплом 19 колхоз илчĕç. Ялхуçалăхĕнче малта пыраканcенчен Пысăк ылттăн медальпе 2 çынна, Пĕчĕк ылттăн медальпе 9 çынна, Пысăк кĕмĕл медальпе 15 çынна, Пĕчĕк кĕмĕл медальпе 58 çынна наградăланă. Кусемсĕр пуçне тата пирĕн республикăран 995 çын Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин Хисеп кĕнеки çине кĕме тивĕçлĕ пулнă.

СССР Верховный Совет депутачĕ орденоносец С. Коротков юлташ ертсе пыракан Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхоз, çавăн пекех тата Елчĕк районĕнчи орденлĕ «Ново-Ищеряково», Куславкка районĕнчи «Динамо», Вăрнар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан, Çĕрпӳ районĕнчи «Емĕт» колхозсем кăçал та хăйсен пархатарлă пысăк ĕçĕсене выставкăра анлăн кăтартаççĕ. Асăннă колхозсем, иртнĕ çулти выставка участникĕсен паха опычĕсем тăрăх ĕçлесе пырса, республикăри ытти колхозсене пысăк тухăçлă тырпулшăн мĕнле кĕрешмеллине кăтартса пачĕç.

Выставка — ялхуçалăхĕнчи çĕнĕ çĕнтерӳсен итогĕ. Вăл пирĕн социализмлă ялхуçалăхĕн мĕнпур отраслисем ӳссе тата аталанса пынине кăтартса парать. Çакăнпа пĕрлех вăл пирĕн колхозсен, МТС-сен, районсен тата республикăсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене тĕплĕн уçса кăтартать.

Выставка ĕçленĕ вăхăтра темиçе çĕр пин колхозник-экскурсантсем, выставкăри павильонсенчи нумай тĕрлĕ тата тĕлĕнмелле паха экспонатсене курса, колхозлă ялсенчен пынă пысăк тухăçлă тырпул мастерĕсен лекцийĕсемпе доклачĕсене итлесе, çĕртен вăл мĕн пама пултарнине пĕтĕмпех илме, колхозăн обществăллă хуçалăхне аталантарма, тырпул тухăçне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне вăйлăн ӳстерме вĕренĕç.

Кăçалхи выставка пирĕн республикăра çураки ĕçĕсем вăйлăн хĕрсе пынă вăхăтра уçăлать. Республикăри малта пыракан колхозсемпе МТС-сем выставка уçăлнă куна çуракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа вĕçлесе пынипе паллă тăваççĕ. Чкаловски, Калинински, Комсомольски районсем тĕштырăсем акса пĕтерчĕç. Асăннă районсенчи МТС-сем те хăйсен заданийĕсене ăнăçлăн тултараççĕ. Çак çуракинче пирĕн республикăри вуншар колхозсем, çĕршер колхозниксемпе трактористсем стахановла ĕçĕн чи лайăх примерĕсене, ĕçри хăвăртлăхпа пахалăха ӳстерсе пыма пĕлнине, сталинла вăйлă тырпулшăн мĕнле кĕрешмеллине кăтартрĕç.

Çапах та, калас пулать, çураки ĕçĕсен хăвăртлăхĕпе пахалăхĕ пур колхозсенче те чăннипех çӳлĕ вырăнта мар ха. Чылай районсемпе колхозсем çураки ĕçĕсене ытлашши тăсса пыраççĕ. Куславкка, Октябрьски, Сĕнтĕрвăрри, Сĕнтĕр, Шупашкар тата Ишлей районĕсем кăçал та, пĕлтĕрхи пекех, çуракине вăхăтра вĕçлессишĕн çителĕклĕ кĕрешмеççĕ. Çак районсен руководителĕсем çуракине вăхăтра тата пысăк пахалăхпа иртерни сталинла вăйлă тырпул туса илмелли тĕп услови пулса тăнине кирлĕ пек ăнланмаççĕ, çуракине вăхăтра вĕçлеме колхозниксен мĕнпур массисене мобилизацилемеççĕ, социализмлă ăмăртăва кулленех сарса пымаççĕ.

Çакă ĕнтĕ эпир Мари тата Мордва республикисемпе социализмлă ăмăртăва тухса хамăр çине илнĕ обязательствăсене пĕтĕмпех пурнăçлассишĕн çителĕксĕр кĕрешнине пĕлтерет.

Парти тата совет организацисен задачи — çураки ĕçĕсене конкретлă тата оперативлă ертсе пырасси, ака-суха ĕçĕнче пулнă çитменлĕхсене вăхăтра пĕтересси, малта пыракансен паха опычĕсене массăсем хушшине сарасси, сталинла вăйлă тырпулшăн пыракан кĕрешĕве вăйлатса пырасси, çак кĕрешĕве колхозниксен анлă массисене мобилизацилесси пулать.

«Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн Чăваш АСС Республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен» СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) йышăннă постановлени пирĕн республикăри ĕççыннисен политикăллă тата производствăллă активлăхне татах та вăйлăн çĕклерĕ. Республикăри колхозниксен нумай пинлĕ масси, çак историллĕ решенипе хавхаланнăскер, колхоз хирĕсенче вăйлă тырпул туса илессишĕн ырми-канми тăрăшса ĕçлет. Колхозниксен ĕçри хастарлăхне кулленех ӳстерсе пырасси, колхозсен, совхозсен, МТС-сен социализмлă ăмăртăвне пуçарса ертсе пырасси, выставка участникĕсен паха опычĕсем çинчен кулленех пропагандăласси — партипе совет организацисен, вĕсен руководителĕсен хĕрӳллĕ задачи.

## Çуракине большевикла ертсе пымалла

### Ĕç хăвăртлăхне ӳстермелле

Вăрмар районĕнчи 17-мĕш тракторнăй бригадăн (бригадирĕ В. Ефимов юлташ) планпа 370 гектар сухаламалла, 320 гектар акмалла. Майăн 18-мĕш тĕлне 111 гектар сухаланă, 50 гектар акнă. Кунта хăвăртлăхсем çителĕксĕр. СХТЗ тракторпа ĕçлекен трактористсем—Н. Пормисов, А. Чеснокова, Н. Павлов, М. Емельянов, Е. Николаев, П. Владимиров юлташсем сменăри ĕç нормине 60—70 процент çеç тултарса пыраççĕ. Пĕр ЧТЗ трактор çинче ĕçлекен Т. Михайловпа И. Антонов юлташсем çеç хăйсен сменăри ĕç нормине çĕршер процент тултараççĕ.

Ку бригада иккĕмĕш бригадăпа ăмăртса ĕçлет. Анчах ăмăрту договорĕ пурнăçа кĕрсе пыраймасть-ха. Кунта ĕç хăвăртлăхне татăклăнах ӳстерни кирлĕ.

* * *

Анаткас, Çитмĕш, Кĕлкеш, Чĕкету колхозĕсем (председателĕсем—И. Дмитриев, И. Тимофеев, Ершов, М. Иванов юлташсем) çуракине кĕске срокра иртерессишĕн кирлĕ пек ĕçлемеççĕ. Ку колхозсенче сухаçсем те, сеялкăпа акакансем те хăйсен нормисене тултарса пыраймаççĕ. Уйрăмăнах акасси кая юлнă. Сухана майăн 10-мĕшĕсенче тухнă пулсан, акма майăн 16-мĕшĕнче тин тытăннă. Акакансем хăйсен нормисене 60—70 процент çеç тултараççĕ. Сеялкăсем çителĕксĕр. Хăвăртлăхсене ӳстермесен, кунта çуракине вĕçлесси питех те вăрăма тăсăлма пултарать.

Анаткас, Çитмĕш, Кĕлкеш колхозĕсенче звеносем пур пулсан та, звеносемпе ĕçлемеççĕ-ха. Кĕлкешри «Комбайн» колхоз 2 гектар ытла сĕлĕне алăпа акнă. Ку колхозсенче кĕрхи калчасене те апат паман, сӳрелемен. Агротехникăллă мероприятисем (сăмахран, яровизаци) начар пурнăçланса пыраççĕ.

Çавăн пекех ку колхозсенче агитациллĕ-массăллă ĕçсем те çителĕксĕр. Анаткаспа Çитмĕш колхозĕсенче çураки пуçланнăранпа та стена хаçачĕсем тухман.

Анаткас, Çитмĕш, Кĕлкеш, Чĕкету колхозĕсен хăйсен çураки ĕçĕнчи хăвăртлăхĕсене вăйлăн ӳстермелле. Малта пыракан колхозсенчен пример илсе, çуракине кĕске срокра, пахалăхлă иртерессишĕн, агротехникăллă мероприятисене пурне те пурнăçласа пырса, вăйлă тырпулшăн большевикла кĕрешмелле.

Çавăн пекех активистсен, комсомолецсен, учительсен агитациллĕ-массăллă ĕçе чĕртсе ямалла, ăна темиçе хут вăйлатмалла.

**Вениамин ТУРТУШ.**

## Нормăсене иртерсе тултараççĕ

Сĕнтĕр районĕнчи колхозсем çуртри акас ĕçе вĕçлесе пыраççĕ. Майăн 21-мĕш тĕлне, районĕпе 8.671 гектар акса, плана 81,5 процент тултарнă.

ЦК ВКП(б) тата СССР Совнаркомĕ ĕçшĕн хушса тӳлемелле туни колхозниксен ĕçлес хастарлăхне нумай хăпартрĕ, пысăк тухăçлă тырпул туса илес ĕçре вĕсем чăн-чăн стахановла ĕçсен тĕслĕхĕсене кăтартаççĕ.

«Новая Юнга» колхоз колхозникĕсем, партипе правительство постановленине ответлесе, акана чи кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа иртернĕ. Колхоз (председателĕ Салдакеев юлташ) тĕштырăсене пилĕк кун хушшинче акса пĕтернĕ, йăлтах сеялкăсемпе акнă. Николай Тепеев тата Алексей Краснов колхозниксем 11 ретлĕ сеялкăпа норма тăрăх 5,5 гектар вырăнне 11-шер гектар акнă. Анна Трифонова тата Павел Столяров норма тăрăх 1,25 гектар вырăнне кашни кунах 2-шер гектар сухаланă.

Юваново ялсоветĕнчи «Искра» (председатель Антонов юлташ) тата Сталин ячĕпе тăракан колхозсем те (председатель Савельев юлташ) çуртрисене пилĕк кун хушшинче йăлтах акса пĕтернĕ. Кунта пĕтĕмпех сеялкăсемпе акнă.

Кăшмаш ялсоветĕнчи «Свобода» колхоз колхозникĕсем кашни кунах нормăсене ытлашшипех тултарса ĕçлеççĕ. Кирилл Чиновников, Тимофей Ефремов, Петр Алжиров, Алексей Белов тата ыттисем те 13 ретлĕ сеялкăпа кулленех 13-шер гектар акнă. Иван Грибов колхозник нормăна кулленех 160-шар процент тултарса ĕçленĕ. Зинаида Михайлова колхозница норма тăрăх 5 гектар вырăнне 7-шер гектар сӳреленĕ.

Ир акмалли тĕштырăсене районра вунпĕр колхоз акса пĕтернĕ. Ытти колхозсем те паян-ыран акса пĕтереççĕ.

Районра юлса пыракан колхозсем те пур. Кĕçĕн Карач тата Ярославка ялсовечĕсем пĕтĕм района каялла туртаççĕ. Çак ялсоветсенчи колхозсем юлашки кунсемччĕнех лăпкăн пурăннă, ака ĕçĕпе пĕрре те васкаман. Пĕтĕм çĕр лаптăкне сеялкăсемпе акма пур майсем те пулнă пулсан та, вĕсем вăрлăхсене алăпа акнă.

Партипе совет органĕсен тата колхоз правленисен паянхи задачи—тĕштырăсене хăвăртрах акса пĕтерсе çийĕнчех ытти, каярах акăнакан культурăсене акма, çĕрулми лартма, ирхи çĕртме тума тытăнасси пулать.

**Н. ПЕТУХОВ.**
ВКП(б) Сĕнтĕр райкомĕн секретарĕ.

## Çураки пысăк пахалăхпа иртет

ЕТĔРНЕ. Кăташри «Пионер» колхоз ака ĕçне пысăк ăнăçлăхсемпе туса пырать. Колхозăн кăçал пурĕ 178 гектар çуртри акса хăвармалла. Ку таринччен колхоз 156 гектар сухаланă, 121 гектар акнă. Вăрлăхсене яровизацилесе акаççĕ.

Ака ĕçĕсем уйрăмăнах 54 çулхи В. Константинов юлташ ертсе пыракан бригадăра аван пулса пыраççĕ. Ку бригадăн 38 гектар çуртри акмалла. Майăн 20-мĕшне бригада суха туса пĕтернĕ, 28 гектар çине çуртри акса хăварнă. Бригадăри А. Матюхина, И. Шкурина, П. Вашуткин, П. Николаев, Е. Маслова сухаçсем, Я. Андреевпа А. Константинов сӳреçсем лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. Кулленхи ĕç нормине вĕсем 130—140 процент таран тултараççĕ. А. Петров, И. Васильев сеяльщиксем яланах нормăна тултарса акаççĕ.

Çавнашкалах К. Павлов, С. Пугачев, Ф. Кольцов комсомолецсем ертсе пыракан бригадăсенче те çураки ĕçĕсем ăнăçлă пулса пыраççĕ. Вĕсем çуракине кĕске срокра, пысăк пахалăхпа иртерессишĕн ăмăртаççĕ.

Колхозра сеялкăсемпе туллин усă кураççĕ. Лашасене уйрах кантараççĕ, унтах тăрантараççĕ.

Кунта культурăллă-массăллă ĕçе аван йĕркеленĕ. Кашни бригадăрах стена хаçачĕсем тухаççĕ. Çураки вăхăтĕнче кашни бригадăрах 4—5-шер номер кăларнă. Агитаторсемпе вулавçăсем ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ ялхуçалăх ĕçĕсенче малта пыракансене премилеме куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялав тăвасси çинчен йышăннă постановленине ăнлантарса пама парааççĕ. Вулав çурчĕн заведующийĕ С. Сынков юлташ яланах уйхирте çӳрет. Уйра вăл колхозниксене çĕнĕ хаçатсем вуласа панисĕр пуçне агротехникăна мĕнле пурнăçласа пымалли çинчен кĕске калаçусем туса ирттерет, колхозра стахановла ĕçлекен çынсен ĕçĕсемпе паллаштарать. Д. Федоров, Г. Тихонов, О. Николаева вулавçăсем те япăх мар ĕçлеççĕ. Уйрах суту-илӳ тăваççĕ.

**Н. ЦВЕТКОВ.**

## Çуртри акса пĕтернĕ

ЕЛЧĔК. «Çĕнĕ-Тӳскел» колхоз кăçалхи çуракине лайăх хатĕрленсе тухрĕ. Партипе правительство «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн Чăваш АСС Республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен» йышăннă постановлени колхозниксен ĕç хастарлăхне ӳстерчĕ.

Çуракине тухиччен кĕрхи калчасене пĕтĕмпе калий тăварĕпе апат панă. Çурхи тулăн вăрлăх участокне те апат панă. Колхоз кайăк-кĕшĕк тислĕкне кĕл, тислĕк пухассине лайăх йĕркеленĕ.

Акакансем, суха тăвакансем, сӳрекенсем ăмăртса ĕçлерĕç. М. Сергеев, Д. Иванов тата Кириллов икĕ касăллă плугпа 1,50 гектар сухалас вырăнне 2 гектар ытларах сухаланă.

Колхозра «Çулăм» ятлă стена хаçачĕ тухса тăрать. Май уйăхĕнче вăл икĕ номер тухнă.

Майăн 20-мĕшĕнче колхоз çуртрисене акса пĕтерчĕ. Халь техникăллă культурăсене акаççĕ. Çак кунсенчех çĕрулми лартма тытăнаççĕ.

**АНИСИМОВ.**

## Ялхуçалăх выставкине тухса кайрĕç

ÇĔРПУ, майăн 24-мĕш. **(Хамăр корр. телефонпа).** Ялхуçалăх выставкине районран 11 çын тухса кайрĕç. Вĕсем пурте выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен стахановецсем. Вĕсем хушшинче ялхуçалăх выставкин участникĕсем пур: **Прохорова**—Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри доярка, **Карышев** — «Новая жизнь» колхозри лаша ферминче ĕçлекен конюх, **Шмер** — опытлă станцин доярки, **Кузьминская**—опытлă станцăри научнăй сотрудница.

## Культбригада ĕçре

ЭЛĔК. Майăн 13-мĕшĕнче районри колхозсене культбригада тухса кайрĕ. Бригада хăйпе пĕрле библиотека, аптечка тата ыт. те илнĕ. Бригадăна Ф. Катеев юлташ ертсе пырать.

Бригадăпа кинопередвижка çӳрет. Колхозниксене «Линия Маннергейма», «Богатая невеста» кинокартинăсене кăтартаççĕ. 8 ялсоветра кинона икĕ пин çын ытла пырса курнă.

**Н. ДМИТРИЕВ.**

1941 çулти Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участници Н. Д. Дормидонтова юлташ (Вăрнар районĕнчи Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз звеньевойĕ).

К. БАБАЕВ фото-ӳкерчĕкĕ.

## Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставки уçăлать

Паян, майăн 25-мĕшĕнче, Колхозсен площадьне Мускаври предприятисемпе учрежденисен пиншер представителĕсем, социализмлă çĕрĕçĕн чаплă çыннисем—облаçсенчен, крайсенчен тата республикăсенчен килнĕ чаплă çыннисем пухăнаççĕ. Кăнтăрла 12 сехетре чаплă обстановкăра 1941 çулти Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставки уçăлать. Митинг хыççăн хăнасем выставка павильонĕсене курса çӳреме пуçлаççĕ.

Майăн 23-мĕшĕнче çĕршер рабочисем проспектсене, площадьсене, клумбăсене тата газонсене татах тепĕр хут пăхса тухнă, вĕсене кирлĕ пек йĕркелесе çитернĕ. Кăнтăрла фонтансем тапма пуçланă. Çĕрĕçĕн чаплă дворецĕсемпе капăрланса тăракан Колхозсен площачĕ праздникри пек капăрланса пырать. Главнăй павильон умĕнче пысăк трибуна туса лартнă.

Грузин, Азербайджан тата Армян республикисен павильонĕсем илемлĕн курăнса лараççĕ. «Ленинград и Северо-Восток РСФСР» павильона реконструкциленĕ, вăл татах та ытларах илемленнĕ. Унăн малти залне Совет Союзĕн гербĕ илемлетсе тăрать. Çак герба Уралти мастерсем тĕрлĕ тĕслĕ чулсенчен туса хатĕрленĕ. Горький облаçĕн залне Хохлома мастерĕсем илемлетсе йĕркеленĕ. Çак павильонра, ытти нумай павильонсенчи пекех, халăх творчествин произведенийĕсене анлăн кăтартса панă.

Украина ССР павильонĕн залĕсем çутă та илемлĕ. Çĕрмамăк акса тăвас ĕçе кăтартса паракан çĕнĕ стэнда лайăх илемлетсе йĕркеленĕ. Стэнд тăрне çапла çырса хунă: «Украинăра çĕрмамăк пулман, халĕ çĕрмамăк пур».

Павильон экспоначĕсем Союзри малта пыракан çак республикăри ялхуçалăхĕ вăйлăн ӳссе чечекленнине ĕнентерӳллĕн кăтартса параççĕ.

* * *

Кăтартса пама акнă тырăсен участокĕсем çинче, садсенче, пахча-çимĕç акса тăвакансем патĕнче—илемлĕ те лайăх.

Ятарласа уйăрнă участокра Мичуринскран илнĕ улма-тырла йывăççисене лартса тухнă. Вĕсем хушшинче — американски сливăпа персик гибричĕ, миндальпа персик гибричĕ тата Сталинла премий лауреачĕ ялхуçалăх наукисен докторĕ П. Н. Яковлев туса кăларнă ытти ӳсен-тăрансен гибричĕсем. Мичурин садне хăй тĕллĕн ӳсекен тернпа персик гибридне кăларса лартнă, ăна Яковлев туса кăларнă. Çакăн пек гибрид тĕнчере халиччен пулман-ха.

«Зерно» павильон умĕнчи делянкăсем çинче майăн 7-мĕшĕнче акнă çурхи тулă шăтса тухма пуçланă.

* * *

Майăн 23-мĕшĕнче Воронеж облаçĕпе Хабаровск крайĕнчен выставкăна пирвайхи экскурсантсем килнĕ.

(ТАСС).

## Шупашкар лесхозĕ—выставка участникĕ

Шупашкарти опытлă лесхоз республикăри малта пыракан лесхозсенчен пĕри. Çĕнĕрен вăрман лартса ӳстерес, вăрмана тĕрлĕ инкексенчен сыхлас ĕçсене кунта кăтартуллăн туса пыраççĕ.

Çак виçĕ çул хушшинче 1000 гектар çĕр лаптăкĕ çинче йывăççем лартнă тата йывăççен вăрлăхĕсене акнă. Лартнă йывăççене пăхас ĕçе лайăх организациленĕ. Кашни 100 тĕп йывăçран 6 йывăç çеç типсе хăрнă. Ку вăл питĕ те пысăк çĕнтерӳ.

Çакăн пек лайăх ĕçленĕшĕн лесхоза кăçал Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулма çирĕплетнĕ. Кунсăр пуçне тата ялхуçалăх выставкин участникĕ пулма лесхозăн Карачура лесничествине çирĕплетнĕ.

Лесхозри уйрăм работниксенчен выставка участникĕсем пулма çак юлташсем тивĕçлĕ пулнă: лесхоз директорĕ А. П. Сарри; темиçе çул хушши лесник пулса ĕçленĕ Л. Н. Никифоров; 32 çул хушши вăрман ĕçĕнче ĕçлекен специалист И. П. Лизгин; Карачура лесничествинчи лесник А. Н. Никифоров; Иккасси лесничествинчи лесник, вăрман ĕçĕнче 38 çул ĕçлекен Р. К. Кириллов; Карачура лесничествинчи работниксем — С. К. Атлашкина тата А. Г. Замятина.

Шупашкарти лесхозăн çитĕнĕвĕсем пысăк. Лесхоза хăйне тата унăн чи лайăх работникĕсене выставка участникĕсем туни — питĕ пысăк хисеп. Вăл хисепе малашне те тивĕçлĕ пулас тесен, лесхозри работниксен стахановла движенипе социализмлă ăмăртăва анлăнрах сарса, татах та лайăхрах ĕçлемелле.

**И. ЕФРЕМОВ.**

## 7,5 миллиард тенкĕ доход илнĕ

ССР Союзĕн государство заемĕсем халăха çулсеренех пысăк доход параççĕ. Сталинла икĕ пятилетка çулĕсем хушшинче государство заемĕсене çыраннă çынсем 5.100 миллион тенкĕ ытла доход илнĕ. Сталинла Виççĕмĕш пятилеткăн виçĕ çулĕ хушшинче халăха заемсем тăрăх 2 миллиард тенкĕ ытла тӳленĕ.

СССР Финанс Халăх Комиссариатĕнче кăçалхи çул заемсем тăрăх мĕн чухлĕ тӳленин итогĕсене тунă. 1941 çулти 4 уйăх хушшинче халăх заемсем тăрăх 413 миллион тенкĕ ытла доход илнĕ.

(ТАСС).

## Осоавиахимăн XV лотерейĕ

Хуласемпе ялсенче Осоавиахимăн XV лотерей билечĕсне сарас ĕç пырать.

Майăн 23-мĕш тĕлне облаçсенчен, крайсенчен, республикăсенчен ССР Союзĕн Осоавиахим Центральнăй Совечĕн текущий счечĕ çине XV лотерей билечĕсемшĕн илнĕ 100 миллион тенкĕ пухăннă. (ТАСС).

## Салтыков-Щедрин сочиненийĕсен собранийĕ

Государствăн «Художествăллă литература» издательстви М. Е. Салтыков-Щедрин çырнă пĕтĕм сочиненисен собранийĕн пĕрремĕшпе улттăмĕш томĕсене пичете панă. Çакăнпа ĕнтĕ вырăссен аслă писателĕ-сатирикĕ çырнă пĕтĕм сочиненисен 20 томлă собранине кăларса пĕтереççĕ. Салтыков-Щедрин сочиненийĕсен собранине юрăсен виçĕ томĕпе публицистикăллă тата критикăллă статьясен виçĕ томне пирвайхи хут кĕртнĕ. Подписчиксем пĕрремĕшпе улттăмĕш томсене тепĕр икĕ уйăхран илме пуçлаççĕ.

## Лермонтов кунĕсем Ленинградра

М. Ю. Лермонтов вилнĕренпе 100 çул тултарнине паллă тăвас шутпа Ленинградри театрсенче, клубсенче, шкулсенче генилле поэта асăнса литературăллă вечерсем, концертсем организациleççĕ.

Пушкин хулинче, Екатеринински дворецра, пысăк выставка уçăлать,

## Шкулсенчи пĕлӳ тĕрĕслевĕсем

Шкулсенчи пĕлӳ тĕрĕслевĕсен пĕрремĕш кунĕ Шупашкарти 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулта. VI «Б» класра вĕренекен отличниксем пĕрремĕш предметпа испытани панă хыççăн. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмалла): Гера Черпаков, Руся Орлова, Тамара Глумова, Рената Иванова тата Тамара Кокарева.

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

# ИСПЫТАНИРЕ

Класа кĕрсенех вĕренекенсен хастарлăхĕ, вĕсем вĕрентекенсем умне тухса ответсем пама хатĕр пулни, хăйсен вăйĕсем çине шанса тăни куçа курăнать. Вĕсем, куллен-кун тĕплĕн вĕренсе пынăскерсем, испытанирен пĕртте шикленмеççĕ. Çав вăхăтрах испытанисем çине çăмăллăн та пăхмаççĕ. Испытани вĕсемшĕн пĕчĕк мар событи. Кунта вĕренекенсем хăйсен ĕçĕсемшĕн отчет параççĕ, наукăсен никĕсĕсене мĕн таран вĕренсе алла илнине, вĕсемпе мĕн таран усă курма пултарнине кăтартаççĕ. Çакна вĕсем аванах ăнланса илнĕ.

Класра çутă, таса. Сĕтелсем çинче, чӳречесем умĕнче — чечексем. Чечексем испытани ирттерекен пӳлĕме илемлетсе тăраççĕ. Стенасем çинче — кирлĕ плакатсем, схемăсем. Вĕренекенсем умне тĕрлĕрен нагляднăй пособисем кăларса хунă. Кунта тĕрлĕ чĕрчунсен, кайăк-кĕшĕксен скелечĕсем, типĕтнĕ хурт-кăпшанкăсем, куç, шăл, чĕре, пуç мими моделĕсем, темĕнле тискер кайăк чĕрнисем, спирт ăшĕнче çĕлен-калтасем т. ыт. те пур.

Испытани пуçланчĕ. Вĕренекенсенчен пĕри тухрĕ те, сĕтел умне пырса, билет кăларса илчĕ. Унăн билет содержанине хăвăртрах пĕлес килет. Вĕрентекен билетăн номерне калама ыйтнине те вăл илтмерĕ,—çавтери тинкерсе вулать билетри ыйтусене. Нумаях та вăхăт иртмерĕ,—унăн куçĕсем савăнăçлăн çуталса кайрĕç: билетри ыйтусене вăл пурне те пĕлет. Вĕренӳ программин материалне аван ăнланса илнĕ ачан пĕлмен ыйту пулĕши вара!

— Манăн пĕрремĕш ыйту: «Кайăксем хуçалăхра мĕнле вырăн йышăнса тăни», — терĕ ответлеме тухнă Петр Кузьмин. Вăл килти кайăксем мĕнле усă кӳни çинчен тĕплĕн каласа кăтартрĕ. Унтан ытти вĕçен кайăксем çинчен те каларĕ. Шăнкăрчă пĕр кун хушшинче 360 таран тĕрлĕрен хурт-кăпшанкăна пĕтерме пултарнине те манмарĕ.

Мĕн вĕреннине вăл аван пĕлет, çавăнпа ыйтусем çине ответленĕ чухне пĕрре те иккĕленсе тăмасть.

— Шуса çӳрекен чĕр-чунсен уйрăмлăхĕсем çинчен кĕскен каласа парха,—хушса ыйтрĕ вĕрентекен Степанова юлташ. Петр Кузьмин ку ыйту çине те уçăмлăн, тĕрĕс ответлерĕ.

Унтан Иванов Лукиян тухрĕ. Вăл та юлташĕнчен пĕрре те кая мар пĕлет. Ку пĕчĕкрех, хăюсăртарах ачаран ытла вичкĕн ответ та кĕтмелле мар пек. Анчах ыйтусем тăрăх вăл пит те йĕркеллĕн, пĕр такăнмасăр каласа пачĕ. Унăн шухăшĕсем çителĕклех тарăнни курăнчĕ. Акă вăл тимĕр шапа скелетне илчĕ те вăл епле тытăнса тăни çинчен ăнлантарчĕ, тимĕр шапа пурăнăçĕн уйрăмлăхĕ, вăл ăçта пурăнни, унăн панцырĕ мĕне кирли, мĕнтен тăни çинчен каласа пачĕ. Плакат тăрăх тата крокодилсем çинчен каларĕ.

Вĕренекенсем, пĕрин хыççăн тепри тухса, хăйсен пĕлĕвĕсене кăтартрĕç. Пĕтĕм материала вĕсем аванах ăнланса илнĕ.

Испытани пĕтрĕ. 38 вĕренекентен 11 «отлично», 14 «хорошо», 13 «посредственно» отметкăсем илчĕç. Начар отметка пĕрре те пулмарĕ.

Вĕренекенсем кăмăллăн килĕсене саланчĕç.

Çапла иртрĕ зоологипе пулнă испытани Шăхасанти вăтам шкулăн VII «Б» класĕнче.

**Г. ЕФРЕМОВ.**

## Инструкцине пăсмалла мар

ÇЕМĔРЛЕ. Шкулсенче хĕрсех пĕлӳ тĕрĕслевĕсем пыраççĕ. Тĕрĕслӳсене инструкцине пĕр пăсмасăр ирттермелле.

Анчах, çапла пулин те, хăшпĕр шкулсенче инструкцине пăсаççĕ. Акă, Яндашри пуçламĕш шкулта (шкул заведующийĕ П. Абазаков юлташ) ачасене майăн 20-мĕшĕнче шутлаттармалли арифметика задачисене майăн 19-мĕшĕнчех шутлаттарнă. Çавăн пирки тĕрĕслӳсем майăн 20-мĕшĕнче пулман.

Çавăн пекех Турханти туллимар вăтам шкулта тăван чĕлхепе вĕрентекен Г. Шугаев юлташ испытанисем ирттермелли билетсене ачасене çыртарнă. Ку вăл инструкцине пăсни пулать.

Районри чылай шкулсенче тĕрĕслӳсем йĕркеллĕн иртсе пыраççĕ. Хутарти вăтам шкулта испытанисен малтанхи кунĕсем пысăк хаваслăхпа иртрĕç. Вĕренекенсем пурте испытанисене пынă. V «А» класс тăван чĕлхепе (диктант) лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕ. Ку класра вĕренекенсем япăх отметка илни пулмарĕ.

Çавăн пекех IX «А» класра вĕренекенсем те С. В. Эльгерĕн «Хĕн-хур айĕнче» поэми тăрăх сочинени лайăх çырнă.

Испытанисем Хутарти шкулта вĕренекенсем арифметикăна çителĕксĕр пĕлнине кăтартрĕç. Арифметикăпа IV класра 7 ача, IX «Б» класра та 7 ача япăх отметкăсем илнĕ.

**С. БАТЬКОВ.**

* * *

СОВЕТСКОЕ. Районри нумай шкулсенче испытанисем ăнăçлăн иртсе пыраççĕ. Прошнинри пуçламĕш шкулта IV класра 27 ача вĕренеççĕ. Вĕсем пурте арифметикăпа испытани ăнăçлă тытнă.

Анчах шкулсенче çитменлĕхсем те чылай палăраççĕ ха. Исментерти пуçламĕш шкулти IV класра вĕренекен 18 ачаран арифметикăпа 10 ача япăх отметка илнĕ. Ку шкулта программа тăрăх кăтартнă материала çителĕклĕ вĕрентеймен пулнă.

Шĕмшешри вăтам шкулта вĕренекенсенчен хăшпĕрисем сăлтавсăрах испытанине пыман, ку вăл — пысăк çитменлĕх.

Советскинчи вăтам шкулти IX класра вĕрентекен учительница Р. Евдокимова юлташ испытани вăхăтĕнче вĕренекенсем тунă йăнăшсене класрах тӳрлеттернĕ. Çапла вăл инструкцине пăснă.

**КУШКОВ.**

Шкул ĕçĕсен инспекторĕ.

## Испытанисем ăнăçлăн иртеççĕ

ÇĔРПУ. Хулари вăтам шкулта испытанисене ирттерме малтанах тĕплĕн хатĕрленнĕ. Родительски комитет (председателĕ Богданов) вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсене испытани ирттерме хатĕрленĕ инструкципе тĕплĕн паллаштарнă. Консультацисем ирттермелли тата ыйхнмалли пӳлĕмсене йĕркелеме пулăшнă.

Аслă классенче вĕренекенсем алгебрăпа, физикăпа тата вырăс литературипе испытани тытнă. Испытани мĕнле пынин результачĕсене çийĕнчех курăнмалла вырăна кăларса çакаççĕ. IX «Б» класра вĕренекен ачасем те алгебра тата физика предмечĕсемпе испытани тытнă. Физикăпа 11 çын «отлично», 9 çын «хорошо» тата 10 çын «посредственно» отметкăсем илнĕ. X класра вĕренекенсем литература предмечĕ тăрăх зачета ăнăçлă панă.

Учительсемпе ассистентсем тата вĕренекенсем испытанисене организованно çӳреççĕ. Консультацисем йĕркеллĕ иртеççĕ.

**Т. М.**

* * *

КАНАШ, майăн 24-мĕш. (**Телефон тăрăх, хамăр корр.**). Шкулсенче испытанисем малтанах туса хатĕрленĕ план тăрăх, йĕркеллĕ иртсе пыраççĕ.

Канашри 2-мĕш номерлĕ шкулта пурĕ 16 класс, вĕсенчен 11 класра испытанисем пулаççĕ. Ку таринччен V «В» тата V «А» классенче арифметикăпа, IV «А» класра вырăс чĕлхипе испытанисем пулса иртнĕ т. ыт. те. Испытанисем ачасем вырăс тата чăваш чĕлхине лайăх пĕлнине кăтартса параççĕ.

Учительница Грекова вĕрентекен IV «В» класра вырăс чĕлхипе 38 ачаран пĕри те «плохо» паллă илмен. Çавăн пекех учительница Алехина вĕрентекен 6-мĕш класра чăваш чĕлхипе «плохо» паллă илнисем пĕр ача та çук.

Испытанисем естествознанипе, Конституцăпе, алгебрăпа лайăх иртсе пыраççĕ.

Çакăнпа пĕрлех çитменлĕхсем те палăраççĕ. Вĕсен шутĕнче, пуринчен малтан, ачасен чĕлхе культури начар пулнине кăтартса хăварас пулать. Çавăн пекех испытани мĕнле пынине пĕлтерсе пыманни те çитменлĕх пулса тăрать.

1-мĕш номерлĕ шкулта та испытанисем организованно, лайăх иртеççĕ. Унта литературăпа, зоологипе тата ытти предметсемпе те «плохо» паллă илнĕ ачасем пĕрре те пулман.

**М. ТИТОВ.**

* * *

УПИ (Красноармейски р.), майăн 23-мĕш. (**Телефонпа**). Упири вăтам шкулта пĕлӳ тĕрĕслевĕсем хĕрӳллĕн пыраççĕ. Шкулта 7 класс. Тĕрĕслевĕн малтанхи кунĕнче IV, VII, VIII, IX классенче вĕренекенсем пурте шкула пынă. Испытани вăхăтĕнче паракан ыйтусем çине вĕсем тĕплĕн ответсем параççĕ. VIII класра «плохо» отметка илекенни пĕр ача та пулман. IX класра вĕренекенсенчен 80 проценчĕ «хорошо» тата «отлично» отметкăсем илнĕ, ыттисем «посредственно» отметкăсем илнĕ. Испытанине ачасем пысăк савăнăçпа çӳреççĕ.

**Я. ПЕТРОВ.**

# ПАЯН ПĔТĔМ СОЮЗРИ ЯЛХУÇАЛĂХ ВЫСТАВКИ УÇĂЛАТЬ

☆ ☆ ☆

## Хĕрӳллĕ ĕçре

### (Стена хаçат редакторĕн блок-нотĕнчен)

Ăшă та хĕвеллĕ кун. Кăнтăрлахи апат вăхăчĕ. Хăмла участокĕ çинче ĕç хĕрсе пырать. 4 звено 4 участок çинче пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Çитес кунсенчех шăтса тухакан çамрăк калчасене кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Маткăсене чава-чава кăлараççĕ, вĕсен вĕçĕсене сивчĕ çĕçĕсемпе каса-каса илеççĕ, черенoксем хатĕрлеççĕ.

Ял енчен, çеремлĕ сăрт тăрăх, икĕ хĕрарăм кăнтăрлахи апат илсе килеççĕ. Пĕрин аллинче пысăк сумка, тепри — хулпуççи урлă квентепе икĕ витре йăтнă. Вĕсем иккĕшĕ те хăмла участокĕпе юнашарах ларакан склад умне пырса çитрĕç. Бригадир участоксенче ĕçлекенсене кăнтăрлахи апата чĕнме кайрĕ.

Пурте пĕр çĕре пухăнчĕç. Пăлаки инке кашнинех паян ирпе çеç пĕçерсе кăларнă çемçе те тутлă çăкăр валеççе парать. Чашкăсем çине пăсланса тăракан, сĕтпе пĕçернĕ лапшу яшки тултарса парать.

Вăхăтран вăхăта колхозниксем пĕр-пĕринпе шӳт туса илеççĕ, ĕç çинчен калаçаççĕ. Апатланнă хыççăн вĕсем хăмла ĕçĕн бригадирĕ Герасим Иванов тавра пухăнчĕç. Бригадирăн сарлака кăкăрĕ çинче Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин Главнăй Комитечĕ панă «Пысăк кĕмĕл медаль» хĕвел çутинче ялкăшса тăрать.

Бригадир колхозницăсемпе кăмăллăн калаçать. Кам мĕн чухлĕ ĕçлени тата нормăна мĕнле тултарса пыни çинчен каласа парать. Пирĕн пата комсомол организацин секретарĕ пырса ларчĕ. Аллинче — «Ильичевка». Çĕнĕ хаçат кăларма материалсем пухать пулас. Фактсене хăй курса, пĕлсе çеç çырать.

— Хаçат илсе анмаллаччĕ, анчах паян çĕнĕ хаçатсем килмен, — терĕ вăл çитсенех.

Эпир унпала хамăра кирлĕ ĕç çинчен калаçма тытăнтăмăр. Хăмла бригадин ĕçĕсем çинчен сăмах пуçларăмăр.

— Ман алăри сведенисем сирĕншĕн çителĕксĕр вĕсем, эсир звеньеводсенчен, стахановкăсенчен ыйтса пĕлме тăрăшăр, вĕсем сире тĕплĕнтерех каласа парĕç, — терĕ бригадир, бригада ĕçĕсем çинчен кĕскен çырнă хут листине парса.

Кăнтăрла иртсе пĕр сехет çитрĕ. Колхозницăсем хăйсен вырăнĕсене ĕçлеме кайрĕç. Эпир те участоксем тăрăх кайрăмăр. Пĕрремĕш участока çитрĕмĕр. Кунта пĕр звено (6 çын) ĕçлет. Звеньевой Чупракова пире хăйĕн звенинчи çынсем мĕнле ĕçленине каласа парать. Калаçăва колхозницăсем те хутшăнаççĕ.

— Виçĕ рете кăштах çитеймерĕ. Каçчен пиллĕке çитеретĕп, — терĕ Тюмерова Васса.

Иккĕмĕш участокра Макарова звени ĕçлет.

— Маргарита, санăн звенора ĕçсем мĕнле пыраççĕ, кам аванрах ĕçлет? — ыйтатпăр эпир.

— Ав, ыйтăр хăйĕнчен. Ун пек маттурри тупас та çук, вăл икĕ рет вырăнне пиллĕк рет касса тухать, — терĕ Макарова, аллине Анисимова еннелле тĕллесе кăтартса. Пирĕнтен инçех мар Анисимова хĕрсе ĕçлет. Вăл, пĕшкĕнсе, сивчĕ çĕçĕпе тăпра айĕнчен тухса тăракан аврăсене касать.

— Ĕç мĕнле пырать?

— Матка касатăп. Кунĕпе пиллĕкшер рет тухатăп.

Таруç инкене çитме нихепле те май килмест: пит хăвăрт ĕçлет вăл...

Анисимовăпа юнашар, виççĕмĕш участок çинче Мастянковăсем: Любăпа Феоктиста ĕçлеççĕ. Ĕç çинчен калаçнă чухнех комсомол организаци пирки калаçу тапранса кайрĕ.

— Эпир Фенькăпа иксĕмĕр те комсомол ретне кĕрес тетпĕр-ха. Пире илеççĕ-ши унта? — именерех ыйтрĕ Люба.

— Илетпĕр. Мĕншĕн-ха илес мар çакăн пек çамрăксене, илетпĕр, — терĕ комсомол организацин секретарĕ.

— Эпир заявленисем те çырнă та...

— Питĕ аван. Çитес пуху майăн 22-мĕшĕнче пулать. Пухăва пырăр.

— Мĕнле-ха эсир, çамрăксем ман пата, виççĕмĕш звенона пырса та курасшăн мар. Е пире начар ĕçлет тетĕр-и? — хавассăн кулса пырса тăчĕ пирĕн пата Дарья Еремеева.

— Пĕрремĕш звенона çитес çуках ĕнтĕ эсир,— юри тĕртсе каласа хутăм эпĕ.

— Каларĕ тупса. Манăн звено ĕçе пуринчен малтан пĕтерет. Паян каçчен пĕтеретпĕр эпир, илтрĕн-и?.

Эпир тăваттăмĕш звено ĕçленĕ çĕре каятпăр. Настасия Иванова патне пыратпăр.

— Иванова юлташ, ĕçсем мĕнле пыраççĕ?

— Мĕн унта... ĕçлекелетпĕр кăштах. Мĕн пултарнă таран ĕçлекелетпĕр...

— Çапах та, нормăна ытлашшипех тултарнă пулĕ-ха эсĕ. Миçе рет тухрăн?

— Ку участокра ретĕсем кĕске. Вăрăм пулсан ун чул тăвас çук та... Кăнтăрлаччен виçĕ рет касса тухрăм. Ăçтан тавлашăн çынсемпе...

Эпир ăна ĕç нормипе паллаштаратпăр. Иванова ирĕксĕрех кулкаласа илет.

— Вара эпĕ мĕн... Çур кунрах пĕр кунхи нормăна тултартăм-и?

— Тултарнă. Кунĕпе икĕ норма та тултаратăн эсĕ.

* * *

Туппай Есмĕлĕнчи «Красная Чувашия» колхоз (Октябрьски р.) çулсеренех хăмла лартса пысăк тупăш илет. 1940 çулта колхоз хăмларан 60 пин тенкĕ ытла тупăш илнĕ. Вăтам шутпа кашни гектартан 8,41 центнер хăмла пухнă.

Кăçалхи çул кашни гектартан вăтам шутпа 10 центнер туса илме палăртнă.

Хальхи вăхăтра хăмла участокĕ çинче хĕрӳллĕ ĕçсем пыраççĕ. Участокăн лаптăкĕ 7,7 гектар. Ун çине кăçал 400 лав тислĕк тăкнă, 100 центнер минерал çăнăхĕ сапнă. Вăл шутран фосфорит çăнăхĕ 65 центнер, азотлă удобренисем 13 центнер, кали тăварĕ 17 центнер, суперфосфат 5 центнер.

* * *

Халĕ шăтса тухакан маткăсене касас ĕç пырать. Планпа ку ĕçе 5 кунра пĕтермелле пулнă пулсан, пур звеносем те 4 кунра пĕтерчĕç. Еремеева ертсе пыракан 3-мĕш звено 3,5 кунра пĕтерчĕ.

Норма тăрăх пĕр кун хушшинче 325 матка уçмалла. Пĕрремĕш звенори А. Чупракова тата В. Тюмерова юлташсем 650-шар тĕп уçса нормăна 200 процент тултарса пыраççĕ. Ку звенора Евлампия Патерова та нормăна ытлашшипех тултарса пырать. Иккĕмĕш звенори Анисимова 300 матка касас вырăнне, 750-шар касса, нормăна 250 процент тултарать. Виççĕмĕш звенора звеньевой Дарья Еремеева пĕр кун хушшинче 150 штука матка уçнă, 900 каснă. Вăл пĕр кунхи нормăна 400 процент тултарнă. Çапла ĕçлет, пысăк тухăçлă хăмла туса илессишĕн кĕрешет Иванов юлташ бригади.

**А. ОДИНЦОВ.**

«Малалла» стена хаçачĕн редакторĕ.

☆ ☆ ☆

## ÇАМРĂК ОПЫТНИКСЕМ

Пӳлĕме виçĕ ача кĕрсе тăчĕç. Пурте пĕр çулхисем пулас вĕсем, 5-мĕш классенче вĕренеççĕ.

— Паян мĕн тумалла-ши пирĕн? Эпир ĕçлес тесе килтĕмĕр,—терĕ вĕсенчен пĕри.

— Аван. Малтан ĕнер пусса пĕтермен çĕр лаптăкне пусас пулать. Кайран вара акма пуçлăпăр, — ответлерĕ инструктор.

Ачасем васкасах участок çине тухрĕç. Ку — техникăллă ялхуçалăх станцин участокĕ. Мĕн-мĕн кăна çук кунта! Тĕрлĕ сортлă ыраш, тулă, сĕлĕ, кок-сагыз, крым сагыз, йĕтĕн-кантăр йышши культурăсем, çу паракан т. ыт. нумай тĕслĕ çимĕçсем акнă. Хăшĕсем шăтса та тухнă ĕнтĕ.

Çак паха та интереслĕ ĕç пĕтĕмпех вĕренекенсен—çамрăк натуралистсен вăйĕпе пулса пырать. Вĕсем станцири инструктор Федоров юлташ ертсе пынипе ĕçлеççĕ. Çамрăк натуралистсен кружокĕнче иртнĕ çулта кăна 12 ача пулнă, халĕ 40 ачана çитрĕ. Пурте вĕсем опытсем тăвас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ.

Акă Шура Маркелова звенине илер. Вăл чылайранпа ĕнтĕ кĕрхи ырашăн тĕрлĕ сорчĕсене яровизацилесси енĕпе ĕçлет. Звенон хăйĕн участок пур. Унта «Авангард» тата «Немышлянская» ятлă сортлă ырашсем акнă, кашнинех тĕрлĕ срокра яровизациленĕ.

— Акă çакна пачах яровизацилемен, ун çумĕнчине 10 кун хушши, теприне 20 кун хушши яровизацилесе акнă. 30, 40, 50 тата 60 кун хушши яровизациленисем пурне те çак кунсенче кăсал çуркунне акрăмăр. Çав опыта эпир ыраша тимесе кун хушши яровизацилесен çуркунне акнипе тырă илме май пуррине пĕлесшĕн, — тесе каласа пачĕ Федоров юлташ.

Ваня Федоров звени 36 сортлă тулă акса сăнавсем тăвать. Ачасем çĕрне те хăйсемех çемçетрĕç, хăйсемех акрĕç. Мĕнле ӳссе пынине тата улшăнса тăнине çырса пыраççĕ. Вĕсем ку ĕçе пурте юратаççĕ.

4-мĕш номерлĕ шкулти 7-мĕш класра вĕренекен Валя Маркелова иртнĕ çулта тунă опытсемпе ĕçлет. Кăçал вăл 5 сортлă баклажан акрĕ, пурте лайăх шăтса тухрĕç, лайăх ӳсеççĕ. Унăн примерĕпе халĕ хулара ытти çынсем те баклажан тума тытăнчĕç.

Кăçал çамрăк мичуринецсен звени те чылай опытсем тумалла, сахал мар сортлă çимĕçсем лартмалла. Ку звенона Лида Иванова ертсе пырать. Çамрăк мичуринецсем кăçал 17 сортлă хурлăхан, 10 сортлă хăмла çырли, 6 сортлă крыжовник çитĕнтереççĕ. Кунсăр пуçне тата вĕсемех виноград лартаççĕ, вăл 3 тĕслĕ пулать.

Ачасен техникăллă ялхуçалăх станцинче яланах хаваслă ĕç пырать. Иртнĕ çулта чылай культурăсем лартса ӳстернĕ, опытсем тунă. Кăçал ĕçсем тата ытларах, пысăкрах пулмалла. Ку таринччен 150 тĕслĕ культурăсемпе çимĕçсем акнă та ĕнтĕ, вĕсен хисепĕ пĕтĕмпе 330 сортран та иртмелле. Вĕсем хушшинче каучуконоссем — кок-сагыз, ваточник, йĕтĕн-кантăр йышши 6 сортлă канатчик, çу паракан çĕнĕ культура, «крамбэ аббиссинское», эмелсем тумалли «камфарный базилик», «валериана» т. ыт. йышши культурăсем те пур.

...Пĕчĕк пӳлĕмсенче ретĕн-ретĕн лартса тухнă ещĕксем. Вĕсен ăшĕнче хĕлĕн-çăвĕн тĕрлĕ йышши культурăсем ӳсеççĕ, вĕсемпе сăнавсем тăваççĕ. Акă хăшпĕр опытсем: çĕрулми шăтса тухсан унăн туниндчен помидор тата баклажан сыпнă. Ăна сыпнăранпа вăхăт нумаях та иртмен-ха, иккĕшĕ те лайăх ӳсеççĕ. Çапла вара опыт çĕрулми çинчех помидорпа баклажан туса илме май [illegible].

Çĕмĕрлери ачасен техникăллă ялхуçалăх станцийĕ кăçал Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулма кандидатла тăратнă. Унăн иртнĕ çулхи ĕç итогĕсем начар мар. Кăçал вара татах та лайăхрах результатсем кăтартасса кĕтме пулать. Ăна ĕнтĕ хальхи ĕçсен хăшпĕр тĕслĕхĕсем те уçăмлăн кăтартса параççĕ.

**Хар. ЛИСИН.**

Çĕмĕрле. (**«Чăваш Коммуни» корр.**).

Сĕнтĕрвăрринчи вăтам шкулта вĕренекенсем тихасене шефа илнĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра вĕсем хăйсем шефа илнĕ тихасенчен тĕреклĕ те чăтăмлă лашасем пăхса ӳстереççĕ. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмалла): Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин Пĕчĕк кĕмĕл медалĕпе наградăланă Николай Гурьев тата Сергей Прусов хăйсен тихисемпе.

К. Бабаев фото-ӳкерчĕкĕ.

## Социализмлă ялхуçалăхĕн аслă шкулĕ

Социализмлă ялхуçалăхĕн аслă шкулĕ—Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставки кăçалхипе виççĕмĕш хут уçăлать ĕнтĕ. Выставка пирĕн тăван çĕршыв ялхуçалăх енĕпе тунă чаплă çитĕнӳсене сарлакан кăтартса парать. «Пирĕн выставка çĕнтерӳсен итогне кăтартать çеç мар, вăл тата ялхуçалăхне малалла çĕклентерсе пыма, социализмăн çĕнĕрен чаплă çĕнтерĕвĕсене тума хăватлăн чĕнекенни пулса тăрать» (В. М. Молотов).

Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставки пирĕн совхозсемпе колхозсем ӳссе çирĕпленсе пынине темиçе пин тĕслĕхсемпе ĕнентермелле кăтартса парать.

Юлашки икĕ çул хушши пирĕн республикăри машинно-тракторнăй станцисем, колхозсемпе совхозсем, бригадăсемпе звеносем, фермăсем, ялхуçалăхĕнче малта пыракансемпе специалистсем Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕсен пахаран та паха опычĕсем тăрăх ĕçлерĕç. Çаксемпе пĕрлех выставка участникĕсем пулма право илессишĕн социализмлă ăмăртăва тивĕçлипе сарса пычĕç. Иртнĕ çулта танлаштарсан, кăçал пирĕн республикăра выставка участникĕсен шучĕ икĕ хута яхăн ытларах ӳснĕ.

1940 çулта Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкине пирĕн республикăран икĕ район, ултă совхоз, 112 колхоз, фермăсемпе хурт-хăмăр утарĕсем 57, районсенчи хаçатсемпе пичет работникĕсем 23, çамрăк натуралистсем 14 çын, вăрман хуçалăхĕсем 3, машинно-тракторнăй станцисенче малта пыракансем 86 çын, ытти ĕçсенче малта пыракансем 300 çын хутшăннă. Кăçалхи выставкăра пирĕн республикăран тăватă район, икĕ МТС, 9 совхоз, 124 колхоз, районсенчи хаçатсемпе пичет работникĕсем 28, çамрăк натуралистсем 183 çын, ялхуçалăх институчĕ тата унта малта пыракансем 15 çын, вăрман хуçалăхĕсем 8, машинно-тракторнăй станцисенче малта пыракансем 90 çын, ытти ĕçсенче малта пыракансем 700 çын хутшăнаççĕ.

Кăçалхи выставкăна кандидатсем пуринчен нумай тăратнă район — вăл Вăрнар районĕ. Ку районран пурĕ 141 кандидат тăратнă. Чи сахалли — Ишлей районĕ, мĕнпурĕ те 9 кандидат кăна тăратнă. Республикăра малта пыракан колхозсем виççĕмĕш çул Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕсем пулса тăраççĕ. Куславкка районĕнчи «Динамо», Вăрнар районĕнчи Сталин, Молотов тата Ленин ячĕпе тăракан, Ишлей районĕнчи «Большевик» тата ытти колхозсем — кăçалхи выставкăн участникĕсем. Вĕсем тĕштырă енĕпе те, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те чаплă çитĕнӳсем тунă.

Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕсем — Вăрнар районĕнчи Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан тата Елчĕк районĕнчи «Ново-Ищеряково» колхозсен çитĕнĕвĕсене правительство пысăккăн хакларĕ, вĕсене ССР Союзĕн орденĕсемпе наградăланă. Пирĕн республикăра Выставкăн Главнăй Комитечĕ дипломсемпе наградăланă колхозсем, фермăсем тата выставкăн медалĕсене илме тивĕçлĕ пулнă ялхуçалăхĕнче малта пыракан çынсем сахал мар.

Колхозсем, машинно-тракторнăй станцисем, бригадăсемпе звеносем, фермăсем, ялхуçалăхĕнче малта пыракансем хăйсен чаплă çитĕнĕвĕсене выставкăра кăçал татах тепĕр хут кăтартса параççĕ. Вĕсем иртнĕ çулти ялхуçалăх выставкин участникĕсен опычĕсемпе усă курса паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Акă, выставка участникĕ — Улатăр районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри доярка К. Ионина юлташ ĕçне илсе пăхар. Вăл пĕр улшăнмасăр тăхăр çул хушши доярка пулса ĕçлет. Ионина юлташ 1938—1939 çулсенче хăйне çирĕплетсе панă 11 ĕнерен, кашнинчен 2381 литр, 1940 çулта, выльăх апачĕ тĕлĕшпе пысăк йывăрлăхсем пулнă пулсан та, кашни ĕнерен 2056 литр сĕт суса илнĕ. Унăн «Зорька» тата «Мурка» ятлă ĕнисем талăкра 21—25-шер литр сĕт параççĕ. Кăçал вăл хăй пăхакан кашни ĕнерен 2.500 литр сĕт суса илессишĕн кĕрешет.

Ионина юлташ кăçал та ялхуçалăх выставкин участникĕ, ăна выставкăн Главнăй Комитечĕ Пĕчĕк кĕмĕл медаль парса наградăланă.

Канашри «Авангард» промартельри пахча-çимĕçсем лартса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен В. Винщу юлташ хăйĕн ĕçĕнче паха примерсем кăтартать. Вăл Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ, çулсеренех пысăк тухăçлă пахча-çимĕçсем туса илет.

Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхозри М. Додонова юлташ ертсе пыракан звено республикăра пысăк тухăçлă махорка туса илнипе палăрса тăрать. Додонова юлташ 1939—1940 çулсенче, çавăн пекех кăçал та, ялхуçалăх выставкин участникĕ. Махорка лартса тăвас тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳсем тунăшăн выставкăн Главнăй Комитечĕ ăна Пĕчĕк ылттăн тата кĕмĕл медальсемпе наградăланă.

Додонова звени махорка лартса тăвас ĕçри агротехникăллă мероприятисене яланах вăхăтра тата тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пырать. Çаксене пула Додонова юлташ звени 1939 çулта вăтам шутпа кашни гектартан 35 центнер, рекордлă участок çинче пĕр гектартан 77 центнер махорка туса илнĕ.

— Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче махорка лартса тăвас ĕçри стахановецсен опычĕсемпе паллашса, колхоза таврăннă хыççăн, ун çинчен звено членĕсене тĕплĕн паллаштартăм, иртнĕ çулта тăрăшса ĕçлерĕмĕр, — тет Додонова юлташ. — Тăрăшса ĕçлени чăн та хăйĕн çимĕçне пачĕ. Звено 1940 çулта вăтам шутпа кашни гектартан 40 центнер, рекордлă участок çинче кашни гектартан 90 центнер махорка туса илнĕ.

Додонова юлташ звени кăçал тата пысăкрах тухăçлă махорка туса илме хатĕрленет. Звено вăтам шутпа кашни гектартан 50 центнер, рекордлă участок çинче гектартан 100 центнер махорка пуçтарса кĕме обязательство илнĕ.

Чăвашсен зоотехникăллă опытлă станцинчи «Песня» ятлă ĕне иртнĕ çулта Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче выставка чемпионĕн ятне илнĕ. Кăçал уçăлакан выставкăна та çак ĕнене кăтартма илсе кайнă. «Песня» ятлă ĕнене ултă çул хушши ĕнтĕ пĕр çын — стахановка А. Лаврова юлташ пăхать.

Советски районри «Сеятель» колхозри сысна ферми хăйĕн чаплă çитĕнĕвĕсене 1939—40 çулсенче Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче сарлакан кăтартса пачĕ. Ферма валли выставкăра кăçал та хисеплĕ вырăн уйăрнă. Кăçал выставка участникĕ пулма бригадир Алексеев тата сыснасене пăхакан Л. Васильев юлташсене çирĕплетнĕ. 1938—1939 çулсенче фермăра вăтам шутпа кашни сысна аминчен 17-шер çăвăр илнĕ, вĕсене пурне те пăхса çитĕнтернĕ. Сыснасем ĕрчетес тĕлĕшпе çакăн пек çитĕнӳ тунăшăн выставкăн Главнăй Комитечĕ «Сеятель» колхоза иккĕмĕш степеньлĕ диплом, преми—мотоцикл тата 5 пин тенкĕ укçа парса наградăланă. Сыснасем ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен бригадăн бригадирне Алексеев юлташа Пысăк кĕмĕл медальпе наградăланă. Ферма 1940 çулта тата лайăхрах ĕçлерĕ. Вăтам шутпа кашни амаран 22-шер çăвăр илсе пăхса çитĕнтернĕ.

Çакăн пек тĕслĕхсем татах та нумай. Вĕсем пурте ялхуçалăхĕнче малта пыракансем — Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕсем ялхуçалăхĕнче чаплă çитĕнӳсем тăвассишĕн ырмиканми ĕçленине кăтартса параççĕ.

1941 çулти выставка социализмлă тăван çĕршыв ялхуçалăх енĕпе тунă çитĕнӳсене вăйлатма тата çирĕплетме пулăшĕ. Социализмлă çĕрĕçĕ çулсеренех 8 миллиард пăт тĕштырă туса илмелле, тесе панă сталинла заданине пурнăçа кĕртсе пыма пулăшса, совет государствин вăй-хăватне татах та ӳстерĕ.

**Гр. КАЛИНИН.**

Пӗтӗм Союзри ялхуçалăх выставкинче. ӲКЕРЧӖК ÇИНЧЕ: „Сибирь“ павильон (сулахайра), Азербайджан ССР павильонӗ (варринче) тата Украина ССР павильонӗ (сылтăмра). (ТАСС фото-ӳкерчӗкӗ).

## Выставка участникӗсенчен пӗри

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Пӗр тикӗс тата вăйлă ӳсекен ыраш уйӗ куçа илӗртсе тăрать. Иртнӗ çулсенчи опыта шута илсе, çак çуркунне 21 гектар çине минераллă удобрени, 9 гектар çине тислӗк шывӗ сапса апат панă. Ку тӗлте вара ыраш калчи уйрăмах лайăх ешӗрет.

Кăçал тырпул вăйлă пуласса çирӗппӗн шанаççӗ Янкасри «Волга» колхоз членӗсем. 1937—38 çулсенче 232 гектар çинче кашни гектартан 15,08 центнер тӗштырă туса илнӗ. Урпа тухăçлăхӗ унтан та пысăкрах пулнă: 1937—39 çулсенче 12,1 гектар çинче кашни гектартан 17,35 центнер урпа тухнă. Агротехника правилисене тӗрӗс пурнăçа кӗртсе пыраççӗ. Çулран çулах ӳссе пырать тырпул тухăçӗ. Иртнӗ çулта, вăтам шутпа илсен, кашни гектартан ыраш 17 центнер, урпа, вика, сӗлӗ çирӗмшер центнер тухнă т. ыт. те. Колхозниксем ӗçкунӗ пуçне пилӗкшер килограмм ытла тырпул илнӗ.

Колхоз виççӗмӗш çул ӗнтӗ Пӗтӗм Союзри ялхуçалăх выставкин участникӗ. Кăçал тӗштырăсем енӗпе тунă çитӗнӗвӗ кăтартма колхоза кандидата çирӗплетнӗ. Çавăн пекех артель председателӗ Иван Иванов юлташ та выставка участникӗ.

Иртнӗ 3—4 çул хушшинче тырпул туса илнӗ виçене вăтамăн шута илсе, кăçал кашни гектартан 14,29 центнер тӗштырă туса илме планлă задани панă. Колхозниксем СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ ӗçшӗн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановленипе хавхаланса, планлă заданине ытлашшипех тултарассишӗн кӗрешеççӗ. Кăçалхи çуракинче вӗсем уйрăмах пысăк çӗкленӳпе ӗçлерӗç. Сеяльщиксем Л. Степановпа А. Карпов юлташсен план тăрăх кашни кун 6-шар гектар акмалла пулнă. Вӗсем хăшпӗр кунсенче 11-шер гектар ытла акнă. Сухаланă тата сӳреленӗ çӗрте ӗçлекен колхозниксем те чылайӗшӗ нормăна ирттерсе тултарнă.

— Кăçалхи çуракине,—тет колхоз председателӗ Иванов юлташ,—иртнӗ çултинчен те лайăхрах хатӗрленсе тухрăмăр. Тӗштырăсемпе пăрса йышши культурăсене планпа пăхнă срокра, 7 кун хушшинче, пысăк пахалăхпа акса пӗтертӗмӗр. 35 гектар çине яровизаци тунă вăрлăх акнă. Вăрлăхсене пӗтӗмпех протравить тунă, пăрса вăрлăхне нитрагинланă. Пӗрремӗш бригада 11 гектар çине вăрлăха хӗреслӗ майпа акнă.

Çапла ӗнтӗ, кунта социализмлă çӗрӗçӗнче малта пыракансен паха опычӗсемпе ытларах усă курма, вăйлă тырпул туса илме тăрăшаççӗ. Тухăçлă тырпул туса илме май паракан условисенчен пӗри вăл — удобренисемпе пӗлсе тата туллин усă курни. Çуртри акнă çӗр лаптăкӗ çине 55 центнер минераллă удобрени, 1.400 лав тислӗк хывса хăварнă. Çӗрулми лартмалли участок çине 10 центнер калий тăварӗ сапнă.

Колхоз хуçалăхне пур енӗпе те вăйлатса пымалла—çакăн пек задача лартнă колхозниксем. Обществăллă выльăх чӗрлӗх шучӗ хутшăнса пырать. Тăватă ферма организациленӗ. План тăрăх 80 пуç сысна пулмалла, халӗ 180 пуçа çитернӗ. Фермăри работниксем кашни амаран 12,5 çăвăр пăхса ӳстерме панă планлă заданине пурнăçа ăнăçлăн кӗртессе шанаççӗ. Чăх чӗп фермисӗр пуçне пур фермăсенче те выльăх-чӗрлӗх планпа пăхнă чухлӗ пур.

«Волга» колхоз районра кăтартуллă ӗçлекен колхозсенчен пӗри шутланать. Малашне вăл выльăх-чӗрлӗх тата ытти отраçлĕсем енӗпе те çитӗнӳ туса пырӗ.

Колхоза 1939 çултанпа Иван Иванович Иванов юлташ ертсе пырать. Пӗлсе ертсе пынипе хăйӗн авторитетне ӳстернӗ. Колхозниксем ăна ӗненеççӗ тата вăл каланине яланах итлеççӗ.

**Т. МАЙОРОВ.**

## Сортлă вăрлăх участокӗ

ЭЛӖК. Моисей Иванович Иванов, малтан районри çӗрӗç пайӗнче агроном пулнăскер, партипе правительство чӗннӗ тăрăх вăл производствăна каять. Унтанпа ӗнтӗ вăл виççӗмӗш çул районри сортоучасток заведующийӗ пулса ӗçлет. Иртнӗ икӗ çул хушшинче сортоучасток вăтамран кашни гектар пуçне 16,5 центнер, уйрăмăн иртнӗ çулта 23,6 центнер тӗштырă туса илнӗ. Çак çитӗнӳсемшӗн сортоучастока тата сортоучасток заведующине Главвыставком 1941 çулти Пӗтӗм Союзри ялхуçалăх выставкин участникӗ пулма çирӗплетнӗ. Сортоучасток кашни çулах агротехникăна тӗплӗн тата тӗрӗс пурнăçа кӗртсе пырать. Тӗрлӗрен минераллă удобренисемпе çӗре çемçетет тата тарăн сухалать. Çапла майпа кашни çулах тырпул тухăçлăхне пысăккăн ӳстерет. Иртнӗ çулта 9,49 гектар çинчен кашни гектар пуçне 34,4 центнер сӗлӗ туса илнӗ.

Сортоучасток иртнӗ çулта вăрлăхсене сортсене уйăрассине пысăк пахалăхпа туса ирттернӗ. Кунпа пӗрлех сортоучастокăн çулталăкри отчетне партипе правительство кăтартнă сроксенче тăратнă. Унăн отчетне «отлично» хакпа йышăннă.

Кăçал сортоучасток кашни гектартан 25 центнер тӗштырă туса илме обязательство панă. Йӗпреç районӗнчи сортоучастокпа социализмлă ăмăртăва тухнă. Иртнӗ çулта ăмăртура Элӗк районӗнчи сортоучасток мала тухнă пулнă.

Хӗллехи вăхăтра сортоучасток çумӗнче стахановла шкул ӗçлерӗ. Унтан 37 çын вӗренсе тухнă. Сортоучасток 1941 çулти Пӗтӗм Союзри ялхуçалăх выставкинче пулни унта ӗçлекенсене вăйлă тырпулшăн татах та хытăрах кӗрешме хавхалантарать. Халӗ уншăн кӗрешӳ пырать.

**И. МОСЕЕВ.**

Пӗтӗм Союзри ялхуçалăх выставкин Главнăй павильонне 1939 çулта Нью-Йоркра пулса иртнӗ Пӗтӗм тӗнчери выставкăн экспоначӗ пулнă хрустальнăй фонтана вырнаçтарса лартнă. Фонтана И. М. Чайков скульптор проекчӗ тăрăх СССР Наркомлегпромӗн «Красный гигант» заводӗнче туса хатӗрленӗ.

Н. Алексеев фото-ӳкерчӗкӗ. (ТАСС).

## ÇАМРĂК ЧӖРЕЛЛӖ СТАРИК

Тăхăр сехет.

Вăрăммăн чанкăртатса янăранă звонок кӗçӗрхи заняти пӗтни çинчен пӗлтерчӗ. Цехсенчи тӗрлӗ станоксен кӗрлевӗ лăпланчӗ. Вӗсем çинче ӗçлекенсем хăйсене шанса панă вӗренӳпе ӗçри хаклă инструментсене тирпейлӗн тыткаласа шăлса тасатрӗç, кирлӗ вырăна пуçтарса хучӗç. Унтан хăйсем те, яланхи пекех, умывальник патне пӗрерӗн-пӗрерӗн пырса, çăвăнса шăлăнчӗç. Капла тума вӗсем куллен хăнăхса çитнӗ. Капла тума вӗсене хăйсен юратнă директорӗ Михаил Михайлович Плотников вӗрентнӗ. Акă кунтах, вӗсем хушшинчех çӳрет вăл. Хăйӗн мастерскойӗнче ӗçлеме вӗренекен çамрăк юлташӗсем çине савăнăçлăн пăхать, лăпкăн асăрхаттарать: «Ху ӗçлекен станокпа инструментсем таса пулнипе çеç мар, чи малтанах ху таса пулни кирлӗ».

Ку сăмахсем мӗне пӗлтернине ачасем лайăх ăнланаççӗ. Çавăнпа та вӗсем ӗçпе вӗренӗве юратакан, ӗçпе вӗренӗве юратма вӗрентекен хăйсен кăвакарнă çӳç-сухаллă директорне ăшшăн кăмăллаççӗ, унăн вырнаçуллă сăмахӗсене чӗререн ырлаççӗ, вăл мӗн хушнă—çавна тума тăрăшаççӗ.

— Çын хушнине çеç туни çителӗксӗр,—каллех лăпкăн асăрхаттарать вӗсене Плотников.—Кӗнекесем çинче техника пирки мӗн каланине çеç итлени те çителӗксӗр. Эсир вӗт пулас изобретательсем. Хăвăра халлӗн шухăшлама та ан ӳркенӗр (шухăшланипе пуç нихăçан та çӗмӗрӗлмест). Çав шухăшăн тупсăмӗсене практикăри тӗрлӗ опытсемпе сыхăнтарса тӗрӗслӗр, çирӗплетӗр...

Ачасем, паянхи ӗçри вӗренӗвӗн результачӗсемпе хавхаланнăскерсем, директорпа сывпуллашрӗç, килӗсене саланма тăчӗç. Çав самантра каçхи почтальон хыпаланса кӗчӗ. Пырса кӗчӗ те, çамрăк ачасем хушшинче çӗнӗ çул каçсенче парнесем валеçекен ырă «дед мороз» пек тăракан директора сывлăх сунса алă пачӗ, телеграмма тыттарчӗ.

...Телеграмма... Мускавран...

Нимӗнле ӗçре те, нимӗнле станок умӗнче те чӗтреме пӗлмен Плотников юлташăн алли хальхинче чăтса тăраймарӗ: телеграммăна вуласан чӗтрерӗ, сăнсăпачӗ те улшăнчӗ унăн. Ним калайман енне уссине шăлса илчӗ, пӗтӗрчӗ. Ачасем çине пăхрӗ. Сисрӗç лешсем: ахаль мар, мӗн те пулсан халиччен пулман япала пулнă, мӗнле те пулсан халиччен килмен хыпар персе çитнӗ!

— Мӗнле хыпар, Михаил Михайлович?

Ачасем çавăрса илчӗç ăна. Çур сехет çеç каялла Аслă Мускавран çырнă телеграммăна кунта, Аслă Атăл хӗрринчи Сӗнтӗрвăрринче, техникăллă станцин таса та çутă пӗр пӳлӗмӗнче хыттăн кăшкăрса вуласа пачӗç. Ырă хыпар... Ачасен техникăллă станцийӗн пархатарлă ӗçӗсене пысăк хак пани çинчен, çичӗ çултанпа станцинче директор пулса ӗçлекен Михаил Михайлович Плотников юлташа Пӗтӗм Союзри ялхуçалăх выставкин комитечӗ Пӗчӗк ылттăн медаль тата 2000 тенкӗ укçа парса наградăлани çинчен, пионер Коля Гурьев юлташа Пӗчӗк кӗмӗл медаль тата 500 тенкӗ укçа парса наградăлани çинчен пӗлтерет телеграмма. Наградă илме тивӗçлӗ пулнисене çеç мар, станцинче ӗçлесе вӗренекен çамрăксене пурне те сывлăх сунса ăшшăн саламлать телеграмма.

— Салам сире, эпӗ те саламлатăп!—терӗ Плотников, ачасем çине савăнăçлăн пăхса.

Лешсем хумханулăн алă çупса ячӗç. Унтан пурте, пӗрерӗн-пӗрерӗн пырса, унăн аллине чăмăртарӗç, малалла та нумай-нумай ăнăçуллă ӗçсем тума сунчӗç.

— Ачасем!—терӗ отличница Ольга Хохлова.—Михаил Михайловичран эпир хăйӗн пурнăçӗ çинчен каласа пама ыйтатпăр!..

— Ыйтатпăр!—кӗрлевлӗн ответлерӗç темиçе сасă пӗр харăс.

Шăп. Пурте директор çине пăхаççӗ. Мӗн каламалла. Михаил Михайлович хăй çинчен калаçма юратсах каймасть.

— Ӗçпе вӗренӳ çинчен ытларах калаçас пулать. Ӗçпе вӗренӗве юратма хăнăхас пулать, вара вӗсем хăйсем те сана юратӗç...

Çавăн пек пуçларӗ вăл хăйӗн сăмахне. Мӗншӗн тесен унăн пӗтӗм пурнăçӗ ӗçпе тата вӗренӳпе çыхăнса тăрать. Вăл вăтăр çула яхăн учитель пулса ӗçленӗ, физикăпа вӗрентнӗ. Сывлăхӗ начарланнă пирки врачсем ăна ӗçе пăрахма сӗнӳ панă. Вара вăл пенси çине куçнă.

— Анчах пенсионер пулса пурăнасси кăмăллă професси мар пек туйăнчӗ маншăн,—тет Плотников. — Санаторине ячӗç. Сывалтăм, кантăм. Канса килнӗ хыççăн врачсем мана каллех канма хушаççӗ. Ну и вара, чăтаймарăм...

Çавăнтан пуçласа Плотников юлташ Сӗнтӗрвăрринчи ачасен техникăллă станцин директорӗ пулса ӗçлет. Ӗçлеме пуçланăранпа çичӗ çул иртрӗ. Ку çулсем Плотниковшăн, пӗтӗм станцишӗн хăйне евӗрлӗ çӗнтерӳ итогӗсене палăртса хăваракан пархатарлă çулсем пулса тăчӗç. Малалла мӗнчухлӗ пурăннă çавăн чухлӗ интереслӗрах пек, тулли содержаниллӗ пек туйăнать пурнăç уншăн. Вăл çаплах пулмалла та.

Плотников патне почта кулленех тенӗ пек çӗнӗ хыпарсем илсе килет. «Салам сана, Михаил Михайлович,—тесе çырать танкист Володя Зотов.—Эсӗ мана çамрăклах техникăна алла илме вӗрентнӗшӗн, çирӗп дисциплинăна хăнăхтарнăшăн чӗререн тав тăватăп...»

«...Эсир вӗрентсе каланисене яланах чӗрере усратăп,—тесе çырать халӗ кораблестроительнăй институтра вӗренекен Туманина юлташ.—Сирӗн станцири корабль моделӗсем кунта халь манăн умма темиçе пиншер хут ӳссе тухса тăчӗç. Епле аван вӗсем çине пăхма!.. Епле аван эпӗ вӗсен уйрăм пайӗсемпе сирӗн станцирех çывăххăн паллашнă кунсене тепӗр хут аса илме!...»

Зотовпа Туманина пек çамрăк юлташсене сахал мар воспитани парса кăларнă ку станци. Ку станцинче техника çинчен малтанхи хут пӗлӳлӗх илсе тухнă юлташсем халӗ нумайӗшӗ Хӗрлӗ Çар ретӗнче оборонăн чи ответлă техникипе хӗçпăшалланаççӗ. Çырăвӗсенче вӗсем яланах, хăйсен ӗçне вӗренӳри çитӗнӗвӗсем çинчен каланă май, хăйсен юратнă директорне—малтанхи воспитательне манмаççӗ, ăна чи ăшă кăмăлпа сывлăх сунса саламлаççӗ. Плотников юлташ та вӗсене хирӗç ответ çырсах тăрать. Çырса пӗлтермелли çӗнӗ хыпарсем сахал мар. Кăçалхи çул ку станцири кружоксен хисепӗ те, унта вӗренме çӳрекенсен шучӗ те иртнӗ çултинчен икӗ хут ытларах ӳснӗ. Хулари шкулсемпе çеç мар, ялсенчи ытти шкулсемпе çыхăнса ӗçлессине те станци çулсеренех аванлатса пырать. Вырăнсенчи кружоксен руководителӗсем валли час-часах семинарсем, пӗр пӗрин опычӗсемпе паллашмалли канашлусем пулса иртеççӗ.

Мускавра Пӗтӗм Союзри ялхуçалăх выставки уçăлнăранпах станци—унăн участникӗ. Малтанхи çул унта ку станцирен 3 çын участник пулнă, иртнӗ çулхине 8 çын, кăçал уçăлакан Выставкăра участник пулма ку станцирен 19 çынна çирӗплетнӗ, вӗсенчен улттăшӗ—хӗрачасем.

Партипе правительствăн тимлӗ пулăшăвӗ ачасен техникăллă станцин коллективне çавтери хавхалантарать. Хăйӗн юратнă воспитанникӗсем ыйтнă тăрăх Плотников юлташ каланă сăмахне пӗтерсенех ачасем тăвăллăн алă çупрӗç. Аслă Сталин патне саламлă çыру çырма йышăнчӗç.

— Ӗçпе вӗренӗве чӗререн юратни кирлӗ. Вара пире çӗршыв та юратӗ, Сталин аттемӗр те: «Маттур эсир, ачасем!» тесе калӗ,—тесе пӗтерчӗ хăйӗн сăмахне кăвак çӳçлӗ, çап-çамрăк чунлă директор.

Ачасем станцирен тухрӗç. Вӗсен умӗнче Атăл çутăлса выртать. Вӗсен ӗмӗчӗсем çав Атăл пекех аслă. Анатран улăхакан пароход пристань патне сывхарать. Прожекторӗ вăйлăн çутатать унăн. Пысăк наградăна тивӗçлӗ пулнă çамрăк чӗреллӗ старикран пархатарлă ӗçе вӗренекен ачасен çулӗ çав прожектор пекех çутă.

**П. МИТТА.**

## ЯЛХУÇАЛĂХ ВЫСТАВКИ ТАТА ПИРӖН ЗАДАЧĂСЕМ

Паян акă Пӗтӗм Союзри ялхуçалăх выставки уçăлать. Пирӗн çӗршыв виççӗмӗш çул ӗнтӗ социализмлă ялхуçалăхӗн аслă çитӗнӗвӗсене çак выставкăра кăтартса парать. Миллионшар ӗççыннисем тата колхозсенчи, машинно-тракторнăй станцисенчи, совхозсенчи вуншар пин экскурсантсем ялхуçалăхӗнче малта пыракансен пуян опычӗсене пăхса вӗренеç, вӗсем уйхирсенче тата выльăх-чӗрлӗх фермисенче, садсемпе пахчасенче социализмлă ялхуçалăхӗ тунă юлашки çитӗнӳсемпе усă курĕç, 1941 çулта 7 миллиард та 900 миллион пăт тӗштырă туса илессишӗн, обществăллă выльăх-чӗрлӗх ӗрчетессишӗн, çавăн пекех йышлă пахчаçимӗçсем лартса тăвассишӗн кӗрешӗве тата анлăн сарса пырӗç.

Пӗтӗм Союзри ялхуçалăх выставки малта пыракансен 1941 çулти опычӗпе пуянланчӗ, выставка участникӗсен составӗ чылаях хутшăнчӗ. 1940 çулта Чăваш республикинчен 815 участник пулнă пулсан, 1941 çулта 1300 участник, вăл шутран 4 район, 124 колхоз, выльăх-чӗрлӗх фермисем 36, ялхуçалăхӗнче малта пыракансем 370 çын.

Пӗтӗм Союзри ялхуçалăх выставки уçăлнăранпа ялхуçалăхӗнче малта пыракансен шучӗ ӳсрӗ. 1939 çулти участниксенчен Сталин ячӗпе тăракан колхоза Ленин орденӗпе, «Ново-Ишеряково» колхоза Ӗçлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗпе наградăланă.

Вăрнар, Чкаловски машинно-тракторнăй станцисем пӗрремӗш степеньлӗ дипломсем, Йӗпреç МТС иккӗмӗш степеньлӗ диплом илнӗ.

1939—40 çулсенче пирӗн республикăран 6 колхоза пӗрремӗш степеньлӗ дипломпа, 19 колхоза иккӗмӗш степеньлӗ дипломпа наградăланă.

Малта пыракансенчен икӗ çынна Пысăк ылттăн медальпе наградăланă, вăл шутрах С. К. Коротков юлташ. Пӗчӗк ылттăн медальпе 9 çынна наградăланă, вӗсен шутӗнче тракторист В. Н. Северов, халӗ вăл Чкаловски МТС-ри аслă механик, М. М. Максимов — халӗ Куславкка МТС директорӗ, И. Т. Рыбаков — Куславкка районӗнчи «Динамо» колхоз председателӗ.

Пысăк кӗмӗл медальпе 15 çынна тата Пӗчӗк кӗмӗл медальпе 58 çынна наградăланă. Пӗтӗм Союзри ялхуçалăх выставкин хисеплӗ кӗнеки çине Чăваш республикинчи ялхуçалăхӗнче малта пыракансене 995 çынна кӗртнӗ.

1939—40 çулсенче пирӗн республикăран выставкăра 8 пин çын ытларах пулнă, вӗсем выставкăн паха опычӗсене хăйсен уйхирӗсене, фермăсене, садсене куçарнă, вӗсем стахановецсен ӗç меточӗсене, малта тăракан агротехникăна сарас, çӗрӗçӗнчи тата выльăх-чӗрлӗх ӗрчетессинчи производствăна çӗнӗлле организацилес, тракторсемпе, ялхуçалăх машинисемпе усă курас ӗçсен организаторӗсем пулса тăчӗç.

Паллах, тырпул тухăçлăхне ӳстерес ӗçре Пӗтӗм Союзри ялхуçалăх выставки вăйлăн пулăшнă. 1940 çулта ялхуçалăхӗн тупăшӗ икӗ хут ӳснӗ. Пирӗн республикăри кашни колхозник хуçалăхӗ пуçне 1940 çулта 32,5 центнер, е вăтам шутпа кашни гектартан 12,3 центнер тӗштырă туса илнӗ. Обществăллă выльăх-чӗрлӗх шучӗ: мăйракаллă шултра выльăхсем — 16,1 процент, сыснасем — 22,3 процент, сурăхсем — 28 процент, кайăк-кӗшӗксем — 13 хут ӳснӗ. 123 колхоз, 339 бригада тата 468 звено вăтам шутпа кашни гектартан çӗршер пăт тата унтан та ытларах тӗштырă туса илнӗ.

Вăрнар районӗнчи Сталин, Молотов ячӗпе тăракан, Комсомольски районӗнчи «Мăрат», Çӗрпӳ районӗнчи «Ӗмӗт», Шупашкар районӗнчи Молотов ячӗпе тăракан, Куславкка районӗнчи «Динамо», Хӗрлӗ Чутай районӗнчи «Красное Сормово» колхозсем, Пӗтӗм Союзри ялхуçалăх выставкин опычӗпе сарлакан усă курса, иртнӗ çулсенче пысăк тухăçлă тырпул туса илчӗç. Çӗршер колхозниксем орденлă колхозăн опычӗсене тата ӗç меточӗсене вӗренес шутпа Сталин ячӗпе тăракан колхоза кайса кураççӗ.

Пирӗн республикăри малта пыракан колхозсем хăйсем тунă çитӗнӳсемпе лăпланмаççӗ, татах та пысăкрах çитӗнӳсемшӗн кӗрешеççӗ. Ростов облаçӗнчи Азовски машинно-тракторнăй станцин машинно тракторнăй парка план тăрăх юсас тӗлӗшри опытне республикăри пур МТС-сем те пӗлеççӗ. Кăçал тракторсене юсасси ăнăçлăн пулса пычӗ. 25 машинно-тракторнăй станцинчен 22 МТС тракторсене юсамалли плана срокра тултарнă. Шансах тăмалла, кăçал чылай машинно-тракторнăй станцисем лайăхрах ӗçлеç.

Мускав облаçӗнчи Раменски тата Луховицки районсен опычӗсем тăрăх, Шупашкар районӗнчи «Красный флот» тата Çӗрпӳ районӗнчи «Ӗмӗт» колхозсенче ӗнесене сăвас тӗлӗшпе республикăри курссем организациленӗ. Çак курссем ӗнесен продуктивлăхне пысăккăн ӳстерме май пуррине кăтартса пачӗç.

Партипе правительство кăçал ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чӗрлӗх продуктивлăхне ӳстернӗшӗн колхозниксене ӗçшӗн хушса тӳлесси çинчен историллӗ решени йышăнчӗç. Çак решени ялхуçалăхне малалла аталантарса пыма тата колхозсен обществăллă хуçалăхне тӗреклетме вăйлăн пулăшать.

Пирӗн республикăри колхозсем, XVIII партконференцин решенийӗсене тата СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнăй Комитечӗ колхозниксене ӗçшӗн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановленине пурнăçа кӗртессишӗн кӗрешсе, пысăк активлăхпа, ӗç тухăçлăхне ытлашшипех тултарса ӗçлеççӗ. Кăçалхи çуракин условийӗсем чаплах мар пулсан та, республикăри чылай колхозсем çуракине ăнăçлăн тата пысăк пахалăхпа ирттереççӗ.

Кăçалхи çуракине Калинински, Чкаловски районсем тата Чкаловски МТС лайăхрах ирттереççӗ. Майăн 20-мӗшӗнче Чкаловски МТС хăйӗн тракторпа ӗçлемелли планне тултарнă. ВКП(б) Обкомӗпе Чăваш АССР Совнаркомӗн республикăри Хисеп хăми çине çырнисен шучӗ ӳсет.

Анчах, калас пулать, çураки вăхăтӗнче чылай колхозсенче агротехника правилисене пăснине палăртнă: ăшăх сухаланă, алăпа акнă, вăрлăхсене начар витӗнтернӗ. Çакă ӗнтӗ вăйлă тырпул туса илес ӗçе чăрмантарма пултарать.

Тӗштырăсене акса пӗтерсенех машинно-тракторнăй парка çӗртме сухи тăвас ӗçе куçармалла. Ӗçе çапла организацилемелле: лашасемпе уя тислӗк кăлармалла, тракторсемпе сухаламалла. Çӗртме сухине пысăк пахалăхпа, тарăн сухаламалла, çийӗнчех сӳрелемелле.

Каярах акакан культурăсене акма тата пахча-çимӗçсем лартма та вăхăт ӗнтӗ.

Кăçалхи çулăн климат условийӗ çумкурăксене çитӗнме, ялхуçалăхне сиенлекенсене хунама аван услови туса парать. Çавăнпа çумкурăксемпе тата сиенлекен хурт кăпшанкăсемпе кӗрешме вăхăтра хатӗрленмелле.

Çуракине ăнăçлăн вӗçлес, тырпулсене уйран пуçтарса кӗме лайăх хатӗрленес ӗçсенче выставка пысăк вырăн йышăнса тăмалла. Пӗтӗм Союзри ялхуçалăх выставкине ӗç тухăçлăхне ӳстерес, ялхуçалăх отраçлисен продуктивлăхне хăпартас тӗлӗшре çӗнӗ çитӗнӳсем тунипе паллă тăвасси — кашни колхозăн, МТС-ăн, районăн хисеплӗ ӗçӗ.

**Н. МАЛОВ.**

**Чăваш АССР Çӗрӗç Халăх Комиссарӗ.**

## Чăвашсен зоотехникăллă опытлă станцийӗ кăçал выставкăра мӗн кăтартать?

Чăвашсен зоотехникăллă опытлă станцийӗ выльăх-чӗрлӗх ăратне лайăхлатас тата унăн продуктивлăхне ӳстерес тӗлӗшпе юлашки çулсенче уйрăмах паха ӳсӗмсем тунă. 1940 çулта Пӗтӗм Союзри ялхуçалăх выставкинче опытлă станцирен икӗ экспонат — «Песня» ятлă ӗне тата «Модная» сысна амийӗ пулнă. Иртнӗ çулта тунă ӳсӗмсем татах та паха. Кăçал Пӗтӗм Союзри ялхуçалăх выставкине пурӗ 6 экспонат тăратаççӗ. Иртнӗ çулта красно-горбатовски ăрат енӗпе выставкăра чемпион ятне илнӗ «Песня» ӗнене май уйăхӗн малтанхи кунӗсенчех Мускава илсе кайнă. Çак ӗнене ултăмӗш çул стахановка-доярка Анисия Лаврова пăхать. Март уйăхӗнче вăл хăй пăхакан ӗнерен рекордлă виçепе—1015 литр тата апрель уйăхӗнче 980 литр сӗт илнӗ. Иртнӗ çулта, 297 кун хушшинче, çак ӗнерен 6.809 литр сӗт суса илнӗ пулнă.

730 килограмм йывăрӗш таякан «Луный» вăкăр тата унăн амăшӗ, иртнӗ çулта 5018 литр сӗт панăскер, кăçал пӗрремӗш хут выставкăна хутшăнать. Вăтам шутпа илсен, юлашки икӗ çул хушшинче кунта кашни фуражнăй ӗне 2.930 литр сӗт панă.

Белоанглийски ăратлă «Модная» ятлă сысна ами иртнӗ çулта ялхуçалăх выставкин пӗрремӗш степеньлӗ аттестатне илнӗ. Майăн 28-мӗшӗнче çак сыснана тата унăн икӗ çăварне выставкăна ăсатаççӗ. «Модная» сакăр хутчен çăварласа, вăтам шутпа кашнинчех 12,8 çăвăр тунă. Çăвăрсем ăнăçлă ӳссе çитӗннӗ. «Леопард» ятлă сысна аçи 26 уйăх хушшинче 373 килограмм таякан пулнă. Çак ăрат енӗпе илсен 260 килограмм таякан сыснасем те выставкăна хутшăнма пултараççӗ.

Иртнӗ çулта опытлă зоотехникăллă станцире ӗçлекен 4 доярка, научнăй сотрудниксем 2 çын выставка кандидачӗсем пулнă. Вӗсене пурне те Главнăй Комитет свидетельствисене панă, доярка Шмерь юлташ Пӗчӗк кӗмӗл медаль илнӗ.

Малта пыракан работниксене кăçал та Пӗтӗм Союзри ялхуçалăх выставкин участникӗсем пулма çирӗплетнӗ. Вӗсенчен хăшпӗр работниксем çак кунсенчех Мускава тухса каймалла.

**Н. МИРОНОВ.**

## Пирӗн участниксем

СӖНТӖРВĂРРИ. Кăçалхи выставкăна пирӗн район 34 кандидат тăратнă. Вăл шутран колхозсем 3, колхоз председателӗсем 3, бригадирсем 2, пӗр звеновод, ачасен техникăллă станцийӗ, ялхуçалăхӗнче малта пыракансем 22 çын.

Выставка участникӗн—Молотов ячӗпе тăракан колхозăн тырпул тухăçӗ вăтам шутпа кашни гектартан 16,45 центнер. Ку колхоз кашни çулах пысăк тухăçлă тырпул туса илет. «Сӗнгӗрпуç» колхозри А. Якимова юлташ ертсе пыракан звено икӗ çул хушшинче кашни гектартан 7,25 центнер хăмла пухса илнӗ. Молотов ячӗпе тăракан колхозри пахча-çимӗç акса тăвакан бригада (унăн бригадирӗ Я. Семенов юлташ) иртнӗ 4 çул хушшинче вăтам шутпа кашни гектартан 625,5 центнер выльăх кăшманӗ туса илнӗ.

Выставка участникӗсем хушшинче юннатсем те пур, вӗсем — О. Хохлова, М. Кудряшова, К. Муштакова, К. Семенов тата Н. Михайлова юлташсем. Вӗсем трактор çинче ӗçлеме вӗренсе çитнӗ.

**Н. ЛЬВОВ.**

**С. Семенова** — Улатăр районӗнчи Молотов ячӗпе тăракан колхозри звеновой. Ăна 1939 çулти Пӗтӗм Союзри ялхуçалăх выставкин Пысăк ылттăн медалӗпе наградăланă.

# *Вӑрҫӑ ӗҫӗсен дневникӗ*

**Англипе Германи хушшинчи фронтра** нимӗнле пысӑк ӗҫсемех те пулман. Германи командованийӗн сводкинче каланӑ тӑрӑх, майӑн 22-мӗшӗнче кӑнтӑрла Германи авиацийӗ Англире тата Англин территориальнӑй шывӗсем тӗлӗнче разведкӑллӑ вӗҫевсем туса ҫӳренӗ.

* * *

**Вӑтаҫӗр тинӗсӗн бассейнӗнче** чи хаяр ҫапӑҫусем Крит утравӗ ҫинче сарӑлса пыраҫҫӗ. Майӑн 21-мӗшӗнче кунӗпех, тенӗ Англи командованийӗн сводкинче, Германи самолечӗсемпе илсе пыракан парашютистсен ҫӗнӗ отрячӗсем утравӑн тӗрлӗ пункчӗсенче анса юлма хӑтланнӑ. Германин сывлӑшри десанчӗсем халӗ те вӗҫе-вӗҫе пыраҫҫӗ. Рейтер агентствин Каирти корреспонденчӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, Крит утравӗ ҫине тинӗс урлӑ десантсем илсе пырас ӗҫре нимӗҫсем пысӑк мар суднӑсемпе усӑ кураҫҫӗ. Ҫав суднӑсем Крит утравӗпе Кӑнтӑр Греци хушшинчи анҫӑр тинӗс урлӑ ишсе каҫаҫҫӗ. Англи командованийӗ кӑларнӑ коммюникере каланӑ тӑрӑх, Германи суднисене хӑшне-пӗрне каялла хӑваласа янӑ, хӑшне-пӗрне путарнӑ. Юнайтед пресс агентствин Каирти корреспонденчӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, Германин парашютлӑ десанчӗсем пуринчен ытларах кӑнтӑрла анса юлнӑ. Хальхи вӑхӑтра, тет корреспондент, Гераклион (Кандия), Ретимни, Малеми, Кания районӗнче тата Суда заливӗнче ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, нимӗҫсем пысӑк мар пӗр пунктра — Малемири аэродромра кӑна ҫирӗпленсе тӑма пултарнӑ. Рейтер агентствин ҫар обозревателӗ генерал Губерт Гоф ҫапла ҫырать: Крит утравӗ ҫинчи ҫапӑҫусен результачӗ вӑрҫӑ вӑрҫакан икӗ енӗшӗн те калама ҫук пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрӗ. Халӗ илнӗ сведенисем тӑрӑх пӑхсан, тет малалла Губерт Гоф, ҫапӑҫусем англичансемшӗн лайӑх сарӑлса пыраҫҫӗ. Германи парашютисчӗсен пирвайхи десанчӗн пысӑкрах пайне пӗтерсе тӑкнӑ, тепӗр пайне тыткӑна илнӗ. Анчах та нимӗҫсем пирвайхи десантлӑ отряд валли пысӑк подкрепленисене хӑварт илсе пыраҫҫӗ. Греци материкӗ Крит утравӗ ҫывӑхӗнче вырнаҫса тӑни нимӗҫсене утрав ҫине тапӑнса кӗме авиаци пысӑк вӑйӗсене тата войскӑсен пысӑк чаҫӗсене пухма май парать. Нимӗҫсем, тет малалла Гоф, ҫӗрлехи тӗттӗмпе усӑ курса, тинӗс урлӑ та подкрепленисем илсе пыма тӑрӑшаҫҫӗ. Анчах та ҫак задачӑна ӑнӑҫлӑн татса пама нимӗҫсен пуринчен малтан утрав ҫыранӗ е гавань ҫывӑхӗнче ҫирӗпленсе тӑрас пулать, ҫакӑ вӑл тинӗс урлӑ илсе пыракан десантсене хӳтлесе антарма кирлӗ. Хӑратса пӑрахас тесе, ҫавӑн пекех тата коммуникацисене татас тесе, нимӗҫсем утравӑн тӗрлӗ пункчӗсенче пӗчӗк отрядсене нумай антарса хӑварнӑ. Анчах та противникӑн пӗчӗк отрячӗсем пысӑк хӑрушлӑх кӳме пултараймаҫҫӗ, мӗншӗн тесен вӗсем уйрӑм сӑртсем ҫинче вырнаҫса тӑраҫҫӗ, пӗр-пӗринпе пӗрлешме пултараймаҫҫӗ. Ҫапла пулсан та сывлӑшран пуҫланӑ атака, ҫакӑн пек анлӑн сарса янӑ атака оборона умне пысӑк йывӑрлӑхсем кӑларса тӑратать.

Майӑн 23-мӗш. (ТАСС).

## Англин ҫар командованийӗн представителӗ пӗлтерни

ЛОНДОН, майӑн 23-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви Каиртан Англин ҫар командованийӗн представителӗ тунӑ заявленине парать. Крит утравӗ ҫинчи ларӑ-тӑру пирки командовани представителӗ ҫапла пӗлтернӗ: утрав ҫинче хаяр ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Икӗ енӗ те пуринчен ытларах автоматлӑ пӑшалсемпе, пулеметсемпе тата мортирӑсемпе усӑ кураҫҫӗ. Англипе Греци войскисем ҫавӑн пекех танксемпе тата алӑпа ывӑтса пемелли гранатӑсемпе усӑ кураҫҫӗ. Нимӗҫсем, Фландрире тунӑ пек, самолетсем ҫинчен танксем антарса хӑварни ҫинчен тата Крит утравӗ ҫине мотоциклетлӑ чаҫсем антарса хӑварни ҫинчен калакан сведенисем ҫук.

Командовани представителӗ ҫапла каланӑ: тӗп вырӑнта тӑракан 4 пунктра — Гераклионра, Ретимнире, Канире тата Малемире (Кани патӗнчен хӗвеланӑҫ еннелле темиҫе миляра вырнаҫса тӑракан аэродромра) ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Противник Малемире кӑна ҫитӗнӳсем тунӑ. Кунта противник самолетсене анса ларма территори ҫителӗклӗ туртса илнӗ, анчах та аэродром ҫине союзниксен войскисем артиллерирен персе тӑраҫҫӗ, аэродрома кирӗҫ тӑтӑшах атакӑсем тӑваҫҫӗ. Малемири событисем мӗнпе вӗҫленессине малтанах каласа хума йывӑр, мӗншӗн тесен унта татти-сыппи ҫапӑҫу пырать.

Противник, тенӗ малалла командовани представителӗ, утрав ҫине тинӗс ҫинчен десант антарса хӑварман.

## Англин Ҫывӑхри Хӗвелтухӑҫӗнчи командованийӗ кӑларнӑ коммюнике

ЛОНДОН, майӑн 23-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви Каиртан Англин Ҫывӑхри Хӗвелтухӑҫӗнчи командованийӗ кӑларнӑ коммюникене парать. Коммюникере ҫапла пӗлтернӗ: майӑн 22-мӗшӗнче кунӗпех Крит утравне хирӗҫ противник хаяр атакӑсем тунӑ. Транспорт самолечӗсем ҫинчен войскӑсем антарса хӑварас тата парашютсемпе десантсем антарса хӑварас тесе, нимӗҫсем пӗтӗм вӑя хурса тӑрӑшнӑ. Противник вӑхӑтлӑха Гераклионпа Ретимни патӗнче хӑйне валли позицисем туртса илнӗ, анчах та, штыксем вӗҫҫӗн хаяррӑн тытӑҫса ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн, Германи отрячӗсене пӗтерсе тӑкнӑ. Хальхи вӑхӑтра ҫак пунктсенче иккӗшӗнче те ӗҫсем начарах мар.

Малеми секторӗнче Англи атаки чылаях ӑнӑҫлӑ пулнӑ, анчах та каярахпа противник самолетсемпе пысӑк подкрепленисем илсе пынӑ. Ҫак секторта халӗ те ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ.

Ливире, Соллум районӗнче, ҫавӑн пекех Тобрук районӗнче те, тенӗ малалла коммюникере, Англи патрулӗсем активлӑ кӗрешеҫҫӗ. Абиссинире кӳлӗсен районӗсенчи операцисем лайӑх сарӑлса пыраҫҫӗ.

Иракра Англи войскисем Ирак войскисен контратакине ӑнӑҫлӑн сирсе янӑ, вӗсем вӑхӑтлӑха Эль-Фалуджа хулин хӗррисене пырса кӗнӗ пулнӑ. Иракӑн 20 офицерӗпе 90 салтакне тыткӑна илнӗ.

## Германия Америкӑн дипломатиллӗ представителӗсене Парижран чӗнсе илме ыйтать

НЬЮ-ЙОРК, майӑн 21-мӗш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви Виширен пӗлтернӗ тӑрӑх, ӗҫе лайӑх пӗлекен ҫынсем хушшинче ҫапла пӗлтереҫҫӗ: Германия Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсенчен дипломатиллӗ представительсене пурне те июнӗн 10-мӗш ҫиттиччен Парижран каялла чӗнсе илме ыйтнӑ.

ВАШИНГТОН, майӑн 23-мӗш. (ТАСС). Хаҫатсен представителӗсем панӑ ыйтусем ҫине США государство секретарӗ Хэлл ҫакӑн пек ответ панӑ: манӑн шухӑшпа, Германия дипломатиллӗ представительсене Парижран каялла чӗнсе илме ыйтни консульски представительсене тивмест. Хальхи вӑхӑтра Парижра Америкӑн консульски работникӗсем 7 ҫын шутланаҫҫӗ.

Юнайтед пресс агентстви ҫапла кӑтартса парать: Германия консульски представительсене Парижран чӗнсе илме ыйтас пулсан, США ответлӑ мерӑсем йышӑнма пултарӗ.

*Районри хаҫатсене пӑхса тухни*

# ФЗО шкулӗсене манӑҫа хӑвармалла мар

### „СОЦИАЛИЗМЛӐ ӖҪ"—ҪӖМӖРЛЕ, „ЛЕНИН ЯЛАВӖПЕ"—КУСЛАВККА, „КОЛХОЗ ПУРНӐҪӖ"—ЙӖПРЕҪ.

Ҫӗнӗрен заводсемпе фабрикӑсем, рудниксем, шахтӑсем т. ыт. предприятисем тӑвас ӗҫре ӗҫлеме квалификациллӗ кадрсем вӗрентсе хатӗрлесси ҫинчен ВКП(б) XVIII съезчӗ йышӑннӑ решенисене пурнӑҫа кӗртсе пырса, Совет правительстви иртнӗ ҫулта государство ӗҫ вӑйӗсен резервисене туса хучӗ. Халӗ пирӗн ҫӗршывра ФЗО шкулӗсем, ремесленнӑй тата чугунҫул училищисем уҫса, хуласемпе колхозсенчи ҫамрӑксене промышленность ӑсталӑхне вӗрентме тытӑннӑ.

Ремесленнӑй тата чугунҫул училищисенче тата ФЗО шкулӗсенче занятисем пуҫланни пилӗк уйӑх ытла иртрӗ. Ҫак вӑхӑт хушшинче училищӗсем тата шкулсем пысӑк ҫитӗнӳсем турӗҫ. Майӑн 15-мӗшӗнче ФЗО шкулӗсенчен вӗрентсе кӑлармалли испытанисем пуҫланчӗҫ. Вӑл испытанисем ҫамрӑксем хӑйсен квалификацине лайӑх вӗренсе ҫитнине кӑтартрӗҫ.

Пирӗн республикӑра Куславккари, Канашри тата Ҫӗмӗрлери ФЗО шкулӗсем ҫӗнӗ строительствӑсенче ӗҫлеме кирлӗ нумай кадрсем вӗрентсе хатӗрлерӗҫ. Ҫав шкулсенчен ҫитес кунсенче ҫӗнӗ столярсем, слесарьсем, электросварщиксем, плотниксем, станочниксем т. ыт. вӗренсе тухаҫҫӗ.

Совет правительстви йышӑннӑ тӑрӑх, кӑҫал вӑрман промышленноҫӗ валли квалификациллӗ рабочисем вӗрентсе хатӗрлеме ФЗО шкулӗсем уҫрӗҫ. Ун пек шкулсем пирӗн республикӑра ҫичӗ шкул уҫнӑ.

Промышленность валли ӗҫ вӑйӗсен резервисене хатӗрлесси — пысӑк задача. Ҫав задачӑна пурнӑҫа кӗртес ҫӗрте ФЗО шкулӗсем тӗп вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ ФЗО шкулӗсенче ҫамрӑксене производствӑра ӗҫлеме вӗрентесси мӗнле пыни ҫинчен районри хаҫатсем тӑтӑшах ҫутатса тӑмалла, ҫав шкулсенче вӗренӳ ӗҫне организацилеме пулӑшмалла.

Ҫӗмӗрле районӗнче ФЗО шкулӗсем иккӗ. Ҫав шкулсенче вӗренӳ ӗҫӗ мӗнле пырать, ҫамрӑксем хӑйсен квалификацине мӗнле вӗренсе пыраҫҫӗ, культурӑллӑ-массӑллӑ ӗҫсене мӗнле йӗркеленӗ,—ҫаксем ҫинчен «Социализмлӑ ӗҫ» хаҫатра ытла та сахал ҫыраҫҫӗ. Комбинатри ФЗО шкулӗнче вӗренекенсем промышленность ӑсталӑхне аван вӗренсе пынӑ, ӗҫ нормине ҫитӗннӗ ҫынсенчен те ытларах тултараҫҫӗ. Анчах районри хаҫат вӗсене курмасть. Апрелӗн 15-мӗшӗнче тухнӑ номерта ФЗО шкулӗсенче испытанисем пуҫланни ҫинчен информациллӗ заметкӑсем ҫырнипех лӑпланса ларнӑ. Ҫӗмӗрлери мехлесопункт ҫумӗнчи ФЗО шкулӗнче апрелӗн 15-мӗшӗнчен пуҫласа вӗрентме тытӑннӑ. Ҫамрӑксем вӑрманта ӗҫлеме мӗнле хӑнӑхса пынине районри хаҫатра тупса вулама ҫук. Апрелӗн 20-мӗшӗнче тухнӑ номерта «Специалистсем пуласшӑн» ятлӑ пӗчӗк заметка пичетленӗ. Унта П. Кадеевпа К. Капитонов юлташсем вӑрманта ӗҫлеме квалификациллӗ рабочисем пулассишӗн тӑрӑшса вӗренме пулни ҫинчен ҫырнӑ. Ҫавтери лайӑх заметка. Апла пулин те, вӗсем хӑйсен ӗҫне тума мӗнле хӑнӑхса пынине тата ӗҫ нормине мӗн чухлӗ тултарни ҫинчен пӗр сӑмах та ҫырман. Ҫакӑн пирки заметка хӑйӗн хакне пачах ҫухатать.

Куславкка районӗнчи «Ленин ялавӗпе» хаҫат та комбинат ҫумӗнчи ФЗО шкулӗ ӗҫӗсене курмасть. Март тата апрель уйӑхӗсенче ҫав шкул ҫинчен пӗр сӑмах та ҫырман. Халь ку шкулта испытанисем пысӑк ҫӗкленӳпе пыраҫҫӗ. Паянхи куна ҫӗр ҫын ытла испытанисем панӑ. Вӗсенчен нумайӑшӗ 7-мӗшпе 8-мӗш разрядсемпе вӗренсе тухаҫҫӗ. Районри хаҫатра испытанисем ҫинчен те питӗ сахал ҫыраҫҫӗ.

Йӗпреҫ районӗнчи «Колхоз пурнӑҫӗ» хаҫат та ФЗО шкулӗ ӗҫӗсемпе интересленмест. Шкулта занятисем пуҫлансан вӗренекенсем мӗнле ӗҫлени ҫинчен пӗр сӑмах та курма ҫук.

Государство ӗҫ вӑйӗсен резервисене туса хурасси — государствӑшӑн питех те кирлӗ ӗҫ. ФЗО шкулӗсенчи работниксен тата вӗренекенсен пултарулӑхне районри хаҫатсем ҫинче куллен ҫутатса тӑмалла. Шкулсен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене вӑхӑтра пӗтерме пулӑшмалла.

# ФЗО ШКУЛӖСЕНЧЕН ВӖРЕНТСЕ КӐЛАРМАЛЛИ ИСПЫТАНИСЕМ ВӖҪЛЕНЧӖҪ

Куславккари ФЗО шкулӗнче станочниксен группинче вӗренекен комсомолка-отличница А. Тимофеева производствӑра.

Г. КОСТИН фото-ӳкерчӗкӗ.

## Сталин юлташа тав тӑватӑп

Коммунистла парти, правительство тата Сталин юлташ хӑй ҫамрӑксене вӗрентес тата воспитани парас ӗҫ валли чи лайӑх условисем туса парассишӗн калама ҫук пысӑк тимлӗхпе тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫакна ФЗО шкулӗсенче тӳлевсӗр тумлантарса, тӑрантса усраса вӗрентни те уҫҫӑнах кӑтартса парать.

Правительство туса панӑ условисем пире хамӑр квалификацине ӑнӑҫлӑн вӗренсе ҫитме хушаҫҫӗ. Эпир ҫакна лайӑх ӑнланса илнӗ. Пирӗн шкул испытанисене пысӑк ҫитӗнӳсемпе вӗҫлерӗ, вӗренекенсем нумайӑшӗ «отлично» паллӑпа вӗренсе тухрӗҫ. Эпӗ те отличниксенчен пӗри пулма тивӗҫлӗх илтӗм. Вӗренӳре тӑрӑшса пырса шкултан похвальнӑй грамотӑпа вӗренсе тухрӑм.

Пирӗн умра малашне пысӑк задачӑсем тӑраҫҫӗ. Хамӑра янӑ предприятире татах та тухӑҫлӑрах ӗҫлес пулать. Эпӗ хам ҫине шкулти пекех «отлично» паллӑпа стахановла ӗҫлеме обязательство илетӗп. Производствӑра ӗҫлеме квалификаци илме пулӑшнӑшӑн пӗтӗм тӗнчери ӗҫҫыннисен ҫулпуҫне Сталин юлташа чӗререн тав тӑватӑп.

**Т. МАТВЕЕВ.**

Ҫӗмӗрле.

## Мана комсомол пӑхса ӳстерчӗ

Пӗрре мана ВЛКСМ райкомӗн секретарӗ тӗл пулчӗ. Вӑл эпӗ ӑҫта ӗҫленине, мӗнле пурӑннине ыйтса пӗлчӗ. Эпӗ ӑна промышленность предприятийӗнче ӗҫлеме ӗмӗтленни ҫинчен каласа патӑм. Юлашкинчен ВЛКСМ райкомӗн секретарӗ ФЗО шкулне вӗренме кайма сӗнчӗ. Эпӗ комсомолец. Комсомол организацийӗ хушнине кашни комсомолецӑн итлес пулать. Эпӗ Ҫӗмӗрлери ФЗО шкулне вӗренме кайма тивӗҫлӗ пултӑм.

ФЗО шкулӗнче электромонтерсем, столярсем, рамщиксем, слесарьсем вӗрентсе хатӗрлени ҫинчен пӗлтерчӗҫ. Мана рамщик ӗҫӗ ҫавтери кӑмӑла кайрӗ. Дирекци рамщиксен группинче вӗрентмелле турӗ.

Занятисем пуҫлансан пирвайхи кунсенчех «отлично» паллӑсемпе вӗренсе пытӑм. Халӗ эпӗ ҫул енчен ҫамрӑк пулин те квалификациллӗ рабочи пулса тӑтӑм. Мана комсомол организацийӗ тӗрӗс ҫул ҫине тӑма пулӑшрӗ.

Испытанире хама хушнӑ ӗҫе пысӑк пахалӑхпа туса патӑм. Шкултан отличник пулса тата похвальнӑй грамотӑпа вӗренсе тухрӑм.

Пирӗн ҫӗршывра ҫамрӑксене хӑйсен ӗмӗтне пурнӑҫа кӗртме условисем ҫителӗклӗ. Ҫӗршыва кирлӗ квалификацисене кашни ҫамрӑках илме пултарать.

**Н. ВАСИЛЬЕВ.**

## Пысӑк разрядлӑ рабочисем

КАНАШ, майӑн 24-мӗш. **(Телефонпа).** Вагонсем юсакан заводри ФЗО шкулӗнче паян испытанисем вӗҫленчӗҫ. Пилӗк уйӑх ҫурӑ хушшинче шкул чугунҫул транспорчӗ валли пысӑк квалификациллӗ рабочисем вӗрентсе кӑларчӗ. Вӗренекенсем хӑйсен ӗҫне пур енчен те тӗплӗн вӗренсе ҫитнӗ. Испытани итогӗсем вӗренӳ ӗҫӗ ӑнӑҫлӑн вӗҫленнине уҫҫӑнах кӑтартса параҫҫӗ.

ФЗО шкулӗнче 148 ҫын вӗреннӗ. Вӗсем пурте майӑн 15-мӗшӗнчен пуҫласа испытани витӗр тухнӑ. Шкул дирекцийӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, вӗренекенсенчен 80 проценчӗ «отлично» тата «хорошо» паллӑсем илнӗ.

Ӗҫ вӑйӗсен резервисен Главнӑй Управленийӗ кӑларнӑ приказ тӑрӑх, ФЗО шкулӗсенчен «отлично» паллӑпа вӗренсе тухакансене аттестатсӑр пуҫне тата похвальнӑй грамотӑсем памалла. Канашри ФЗО шкулӗнче 30 вӗренекен ытла похвальнӑй грамотӑсемпе вӗренсе тухрӗҫ.

Мастер Исайченко юлташ ертсе пыракан тимӗрҫӗсен группи вӗренӳре лайӑх тӗслӗхсем кӑтартса пынӑ. Вӑл группа испытанисене те ытти группӑсенчен лайӑхрах ирттернӗ. Группӑра 30 ҫын вӗреннӗ. Вӗсенчен «отлично» тата «хорошо» паллӑсемпе 24 ҫын вӗренсе тухнӑ. Вӑтам паллӑ илекенсем 6 ҫын кӑна пулнӑ.

Вӗренекен Рожаев юлташ тимӗрҫсен группинче чи лайӑх вӗренекенсенчен пӗрийӗ шутланнӑ. Вӑл ватӑ рабочи-тимӗрҫӗсенчен пӗрре те кая юлман, ӗҫ нормине яланах ирттерсе тултарса пынӑ. Шкул дирекцийӗ ӑна лайӑх вӗренсе пынӑшӑн преми те панӑ. Ҫавӑн пекех Краснов, Жарков, Соколов юлташсем те «отлично» паллӑпа вӗренсе тухнӑ. Вӗсене пурне те похвальнӑй грамотӑсем параҫҫӗ.

Слесарьсен группине мастер Бормотин юлташ вӗрентнӗ. Вӑл вӗрентнӗ группа та испытанисене ӑнӑҫлӑн вӗҫленӗ. «Отлично» паллӑпа—13 ҫын, «хорошо» паллӑпа—10 ҫын, «посредственно» паллӑпа—7 ҫын вӗренсе тухнӑ.

Слесарьсен группин май уйӑхӗнче тӑватӑ урапаллӑ 18 вагон юсамалла пулнӑ. Ҫамрӑк слесарьсем ҫак плана ирттерсе тултарассишӗн тӑрӑшса ӗҫленӗ. Паянхи куна вӗсем 20 вагон юсаса кӑларнӑ.

Цветков, Малышкин, Сорокин, Хрящев юлташсем хӑйсен ӗҫне юратса тунӑ, «отлично» паллӑпа вӗреннӗ. Вӗсем испытанире те мала тухнӑ. Аттестаци комиссийӗ ҫак юлташсене 3-мӗш разряд панӑ. Вӗсем хӑйсен ӗҫне 4-мӗшпе 5-мӗш разрядпа ӗҫлекен слесарьсем пекех тӑваҫҫӗ.

Электросварщиксен группи те испытанисене начар мар вӗҫленӗ. Анчах вӗсен ӗҫне лабораторинче тӗрӗслесе пӗтермен-ха. Ҫамрӑк электросварщиксен ӗҫӗ ҫитес кунсенчех паллӑ пулать.

Шкулта испытанисем вӗҫленчӗҫ. Пысӑк квалификаци илнӗ ҫамрӑк рабочисем ҫывӑх вӑхӑтрах производствӑна ӗҫлеме каяҫҫӗ. Шкултан вӗренсе тухнисем пурте стахановец пулма сӑмах параҫҫӗ.

## Шкултан пурте вӗренсе тухнӑ

КУСЛАВККА. Комбинатри ФЗО шкулӗнче вӗренекенсем майӑн 24-мӗшӗнче, кӑнтӑрла иртсен 2 сехет тӗлне испытанисем парса пӗтерчӗҫ. Шкулта 149 ҫын вӗреннӗ. Вӗсем пурте испытанисене пысӑк ҫитӗнӳсемпе панӑ. Шкултан вӗренсе тухайманнисем пӗрре те ҫук.

Испытанисем ҫамрӑк рабочисем хӑйсен ӗҫне лайӑх вӗренсе ҫитнине кӑтартса пачӗҫ. Шкултан 6—7—8-мӗш разрядсемпе 85 ҫын, 4-мӗшпе 5-мӗш разрядсемпе 60 ҫын вӗренсе тухнӑ. 3-мӗш разряд илнисем пурӗ те 4 ҫын кӑна пулнӑ.

Группӑсем испытанине лайӑх пахалӑхпа вӗҫлессишӗн пӗр-пӗринпе ӑмӑртса ӗҫленӗ. Ӑмӑртура станочниксен 1-мӗшпе 2-мӗш групписем малти вырӑна тухрӗҫ. Мастерсем Терентьевпа Мозяков юлташсем хӑйсен групписене лайӑх вӗрентсе кӑларчӗҫ. Вӑл группӑсенче вӗреннисенчен нумайӑшӗ пысӑк разрядпа (7-мӗшпе 8-мӗш разрядпа) вӗренсе тухнӑ.

Мастер Терентьев группинче 40 ҫын вӗреннӗ. Вӗсенчен виҫҫӗмӗш разряд илнисем пачах ҫук, пурте 4—5—6—7-мӗш рязрядсем илнӗ.

Группӑри станочниксем: А. Васильев, В. Васильев, Л. Сергеев, В. Михайлов, Н. Колпаков юлташсем похвальнӑй грамотӑпа вӗренсе тухрӗҫ. Вӗсем ӗҫ нормине куллен 125—140 процент тултарса пынӑ.

## *КӖСКЕН*

Медсестрасем хатӗрлекен курссем хальхи вӑхӑтра Улатӑрта, Ҫӗмӗрлере тата Сӗнтӗрвӑрринче ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсенче пурӗ 95 хӗрарӑм вӗренет.

* * *

Шупашкарти кӗнекесем сутакан магазин кӑҫал 24 пин учебник сутӑн илмелле. Майӑн 15-мӗш тӗлне плана 40 процент тултарнӑ.

* * *

Ялхуҫалӑх специалисчӗсем валли ҫуртсем туса лартма тата выльӑхсем илме пулӑшас майпа, ялхуҫалӑх банкӗн Чӑваш Республикинчи контори кӑҫал 150 пин тенкӗ кивҫен укҫа уйӑрса панӑ.

* * *

Канашри «Авангард» промартелӗ иртнӗ ҫулта тунӑ тупӑшран 84 пин тенкине артель членӗсем хушшинче валеҫнӗ.

Куславккари ФЗО шкулӗнче станочниксен группинче вӗренекен комсомолец-отличник С. Кузьмин производствӑра.

Г. КОСТИН фото-ӳкерчӗкӗ.

## Похвальнӑй грамота илме тивӗҫлӗ пултӑм

Ҫӗмӗрлере пире ӑшшӑн кӗтсе илчӗҫ, шкулта мӗнле квалификацисем илме пулни ҫинчен каласа пачӗҫ. Унтан экскурсине илсе кайрӗҫ. Пирвайхи цеха кӗрсенех пысӑк рама ӗҫлесе ларнине куртӑм. Мана вӑл машина питех те интереслентерчӗ. Эпӗ вара рамщиксен группинче вӗренме ирӗк пама ыйтрӑм. Шкул дирекцийӗ манӑн ыйтупа килӗшрӗ.

Вӗренме килнӗ ҫамрӑксене группӑсене уйӑрнӑ хыҫҫӑн занятисем пуҫланчӗҫ. Эпир мастерсем ертсе пынипе производствӑра ӗҫлеме тытӑнтӑмӑр. Эпӗ хамӑн ӗҫе юратса туса пытӑм, малтанхи кунсенчех мастерсем манӑн ӗҫе ырлама пуҫларӗҫ. Ҫакӑн хыҫҫӑн ӗҫ ӑнӑҫлӑн пулнипе хавхаланса татах та тӑрӑшса вӗренсе пытӑм, ӗҫ нормине кулленех ирттерсе тултарма пуҫларӑм.

Май уйӑхӗ умӗн пӗр-пӗринпе ӑмӑртса вӗренме пуҫларӑмӑр. Ӑмӑртса вӗренсе ӗҫ нормине ытлашшипех тултарса пытӑм. Ҫакӑн пек ӗҫлесе отличник ятне илме тивӗҫлӗ пултӑм. Майӑн 1-мӗшӗнче мана преми пачӗҫ.

Нумаях пулмасть испытанисем пуҫланчӗҫ. Испытанине эпӗ тӑрӑшса хатӗрлентӗм. Пӗрре ирхине мана испытани памалли ҫинчен пӗлтерчӗҫ. Эпӗ хамӑн станок ҫинче ҫав кун халичченхинчен те тухӑҫлӑрах ӗҫлерӗм. Аттестаци комиссийӗ манӑн ӗҫе «отлично» хак пачӗ, похвальнӑй грамота памалла турӗ.

Ҫапла вара эпӗ промышленность предприятийӗнче ӗҫлеме квалификаци илтӗм. Ҫитес кунсенчех пире ӗҫлеме яраҫҫӗ. Унта эпӗ стахановла ӗҫлеме, хамӑн пӗлӗве ӳстерсе пыма пулатӑп.

**Л. ЕМЕЛЬЯНОВ.**

Ҫӗмӗрлери ФЗО шкулӗнче вӗренекен.

## В. И. ЧАПАЕВӐН ПУРНӐҪӖПЕ ӖҪӖСЕМ

### Ҫар историйӗн конференцийӗ

ВЛКСМ хула комитечӗ, Шупашкарти пионерсен ҫуртӗнче, майӑн 30-мӗшӗнче каҫхине 7 сехетре ҫар историйӗн конференцине ирттерет. Вӑл конференцире граждӑн вӑрҫи геройӗ, чӑваш халӑхӗн землякӗ В. И. Чапаев пурнӑҫӗпе ӗҫӗсем ҫинчен докладсем пулаҫҫӗ. Чапаевӑн боевой ӗҫӗсем ҫинчен доцент Кузьмин юлташ тата Чапаев дивизийӗн виҫҫӗмӗш бригадин штаб начальникӗ пулнӑ Кочергин юлташ докладсем туса параҫҫӗ. Чӑваш писателӗсемпе поэчӗсем Чапаев ҫинчен ҫырнӑ сӑвӑсене тата произведенисен сыпӑкӗсене вуласа параҫҫӗ.

Конференцине хатӗрленнӗ май, ВКП(б) хула комитечӗн парткабинетӗнче фотовитрина тата Чапаев ҫинчен ҫырнӑ литературӑн выставкине организациленӗ.

Комсомолӑн пуҫламӑш организацийӗсен ҫав конференцине ирттерме халех хатӗрленме тытӑнмалла. ВЛКСМ хула комитетне конференцине миҫе ҫын пыма килӗшнине кӑтартса заявкӑсем памалла.

Конференцине тӳлевлӗ билетсемпе кӗртеҫҫӗ.

## Лекци

Ыран, майӑн 26-мӗшӗнче, ВКП(б) Шупашкар горкомӗн парткабинетӗнче **«Революциллӗ законлӑха пӑхӑнасси—ССР Союзӗнчи кашни гражданинӑн тивӗҫӗ»** темӑпа публичнӑй, тӳлевлӗ лекци пулать. Лектор — **Леонтьев** юлташ. Лекци каҫхине 8 сехетре пуҫланать.

**ПАРТКАБИНЕТ.**

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

*РОДИТЕЛИ и УЧАЩИЕСЯ!*

**ПРОДАВАЙТЕ** использованные учебники.

**ПОКУПАЙТЕ** учебники, необходимые вам в новом учебном году.

ОБЕСПЕЧЬТЕ СЕБЯ

**УЧЕБНИКАМИ**

ЗАБЛАГОВРЕМЕННО

***ЗАПОМНИТЕ!*** Культмаги, раймаги, сельмаги и лавки потребкооперации ПОКУПАЮТ и ПРОДАЮТ

**СТАБИЛЬНЫЕ УЧЕБНИКИ.**

Чувашпотребсоюз.

3—1

ЧӐВАШПОТРЕБСОЮЗА ЯЛАНЛӐХА ӖҪЛЕМЕ

*стройгруппа-начальникӗ,*
*бухгалтерсем,*
*экономист-финансист,*
*машинистка*

**КИРЛӖ**

Адрес: г. Чебоксары, ул. Карла Маркса, д. № 3, Отдел кадров.

3—1

**ЧУВАШСКАЯ РЕСПУБЛИКАНСКАЯ ПОЛИТИКО-ПРОСВЕТИТЕЛЬНАЯ ШКОЛА**

объявляет прием учащихся на I, II и III курсы на 1941—42 учебный год.

Политико-просветительная школа является средним специальным учебным заведением с трехгодичным сроком обучения, готовящим квалифицированных политико-просветительных работников: заведующих и инструкторов районных домов культуры, инспекторов районных отделов народного образования, заведующих избами-читальнями и колхозными клубами.

В политико-просветительную школу принимаются лица в возрасте от 16 до 35 лет, имеющие образование в объеме неполной средней школы.

Все поступающие в политико-просветительную школу подают заявления с 1 июня по 20 августа на имя директора школы с приложением следующих документов: а) свидетельство о рождении, б) свидетельство об образовании, в) справку врача о состоянии здоровья, двух фотокарточек с собственноручной подписью на них.

Поступающие в политико-просветительную школу подвергаются приемным испытаниям в объеме программы неполной средней школы по следующим предметам: а) русскому языку (письменно и устно), б) математике (письменно и устно), в) географии (устно), г) Конституции СССР (устно), д) родному языку (письменно и устно).

Приемные испытания проводятся с 16 по 26 августа включительно.

Лица, желающие поступить на II и на III курс политпросветшколы, подвергаются испытаниям за предыдущий курс по всем предметам.

Из числа лиц, выдержавших приемные испытания, то-есть получивших оценки по всем предметам не ниже „посредственно", в первую очередь принимаются лица, имеющие опыт политпросветработы и получившие наиболее высокие оценки.

Отличники НСШ принимаются в политпросветшколу без испытаний с зачислением на стипендию.

Лица, сдавшие испытания в политпросветшколу, на 2/3 оценок „отлично" и 1/3 „хорошо", зачисляются на стипендию в размере 200 руб. в месяц и обеспечиваются общежитием.

За обучение в политико-просветительной школе вносится плата в соответствии с установленной платой за обучение в средних специальных учебных заведениях.

Заявления направлять по адресу: гор. Чебоксары, Чувашской АССР, ул. Аптечная, дом № 3, Политпросветшкола, директору.

2—1 ДИРЕКЦИЯ.

**Казанский меховой техникум Наркомлегпрома СССР**

объявляет осенний прием на 1941—42 учебный год на 1 и 2 курсы.

Обучение платное—150 руб. в год.

Техникум готовит техников-технологов мехообрабатывающей промышленности: а) по выделке и окраске мехов, б) по изготовлению меховых изделий.

Окончившие техникум направляются на работу в Москву, Ленинград, Харьков, Псков, Киров, Казань.

Имеются русские и татарские группы.

Прием заявлений до 10 августа. Условия приема в техникум—общие для всех техникумов. Заявления подаются на имя директора. К заявлению должны быть приложены документы в подлинниках: свидетельство о рождении, свидетельство об окончании средней школы, справка врача о состоянии здоровья, три фотокарточки, автобиография.

Окончившие семилетку на „отлично" принимаются в техникум без испытаний и зачисляются на стипендию.

От платы за обучение освобождаются: дети пенсионеров, воспитанники детдомов и материально-нуждающиеся студенты-отличники.

При техникуме имеется библиотека, обеспечивающая студентов всей необходимой учебной, справочной, а также художественной литературой.

Нуждающимся предоставляется платная работа в свободное от учебы время в мастерских техникума.

Зачисленные в техникум обеспечиваются общежитием, полным комплектом постельных принадлежностей, баней за счет техникума. При техникуме имеется студенческая столовая и прачечная.

Начало занятий с 1 сентября.

АДРЕС: Казань, уг. Островской—Университетской, д. 39/6. Меховой техникум. тел. 13-92.

3—1 ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редактор заместителӗн — 3—97, редакци секретарӗн — 4—40, пропаганда пайӗн — 4—97, парти пурнӑҫ пайӗн — 7—97, экономика пайӗн — 0—88, ҫырусемпе рабселькорсен пайӗн — 2—30, «Ӗҫхӗрарӑмӗ» журналӑн — 6—23, «Ленин ҫулӗпе» журналӑн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 3391

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 260. Ф. б. 58 - 84 п. л.